Чăваш Республикăн ... библиотеки

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТ... ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Декабрь
27
ВЫРСАРНИКУН
№ 252 (9161)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Председателĕ, Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председателĕ Мао Цзэ-Дун юлташ 60 çул тултарнă ятпа янă саламлă телеграмма (1 стр.).

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Берлинри канашлăвне пухасси çинчен (1 стр.).

Çуркунне акма паха вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлер! (1 стр.)

Халăх тăшманĕсем пирки йышăннă приговора Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем ырлаççĕ (2 стр.).

ПУÇЛАМАШ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ĔÇ ОПЫТĔНЧЕН Н. Солдатов.—Вырăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ÿсĕмсемшĕн (2 стр.).

КИНО. В. Ефимов.—«Тусем хушшинчи застава» (3 стр.).

Капкăн кĕтесси (3 стр.).

Г. Егоров.—Корея халăхĕ хуçалăха юсас тĕлĕшпе янăçлă ĕçлет (4 стр.).

Пысăк Берлинăн Халăх представительствин чрезвычайнăй ларăвĕ (4 стр.).

Колхоз председателĕ

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ колхозсенче ертсе пыракан кадрсене суйласа илсе воспитани парас ĕçе хакламаннине пĕтерме кирлине палăртрĕ. Пленум парти, совет тата ял хуçалăх органĕсене политикăпа ĕçлĕх тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленнĕ тата ял хуçалăхĕн аслă шкулĕсемпе вăтам шкулĕсенчен вĕренсе тухнă специалистсене, шутра хуçалăха ертсе пыма пултаракан тата ял хуçалăхне лайăх пĕлекен практиксене ĕçе хутшăнтарса, колхоз председателĕсен составне çирĕплетме хушса хăварчĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление пурнăçласа, парти организацийĕсем колхозсенче ертсе пыракан кадрсене суйласа илес ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме специалистсене, çавăн пекех организаторла ĕçре паха опыт тунă практиксене уйăрса лартнă.

Колхозсем чылай ÿссе тĕреклентĕç, шутра та нумай енлĕ хуçалăхсем пулса тăчĕç. Çавăн пек хуçалăха ертсе пырасси йывăр та ответлă ĕç. Колхоза ертсе пыракан кадрсем хушшинче колхоз председателĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ял хуçалăх артель Уставне пăхăнса ĕçлесе, колхоза пур енĕпе те аталантарса, общественла пурлăха ÿстерсе пыма, çав никĕс çинче колхозниксен пурнăçне лайăхлатма тăрăшасси колхоз председателĕн пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать. Председатель шутра хуçалăха ертсе пыракан çын çеç мар, вăл государство умĕнчи обязательствăсене çирĕп пурнăçласа пыракан ответлă руководитель.

Çапла ĕнтĕ, пысăк хуçалăха ăнăçлă ертсе пырасси, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ял хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе çĕршыв умне кăларса тăратнă программăлла задачăсене пурнăçласси колхоз председателĕсенчен, вĕсем ĕçлеме, ертсе пыма пултарнинчен килет.

Аста колхоз председателĕ пулса малашлăха курса тăракан пултаруллă руководитель ĕçлет, унта колхозниксем тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне султан-çул ÿстерсе пыраççĕ. Çакăн çинчен калаççĕ Совет Союзĕнчи малта пыракан колхозсен ĕçĕсем, çакăн çинчен калаççĕ хамăр республикăри малта пыракан колхозсен ĕçĕсем. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоза Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Ксенофонтович Коротков юлташ ертсе пырать. Колхоз çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туса, султан-çул çăкленсе пынине пурте курса тăратпăр. Колхоз çĕрĕç культурине ÿстерсе, пысăк тупăш илекен хуçалăх пулса тăчĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Социализмла Ĕç Геройĕ В. В. Зайцев юлташ), Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра (председателĕ орденоносец М. Г. Долгов юлташ) тата ытти чылай колхозсенче те çакăн пек тĕслĕхсем куратпăр. Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Гвардеец» колхозсен председателĕсем колхоз производствине тĕплĕн пĕлсе ертсе пыраççĕ. Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса çитернипе кунта общественла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес ĕç те ăнăçлă пулса пырать. Вĕсем те нумай отраслĕлĕ хуçалăха аталантарса пыраççĕ.

Асăннă колхозсен руководителĕсем хуçалăха ертсе пырас тĕлĕшпе колхозниксемпе тачча çыхăнса, колхоз активĕ çине таянса ĕçлеççĕ. Кунти парторганизацисем колхоз ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăраççĕ, колхозниксене воспитани парасси çине тимлĕн пăхаççĕ. Общественла хуçалăха ертсе пыма пĕлекен руководитель кашни колхозника тата унăн пултаруллăхне лайăх пĕлсе тăрать. Пуçаруллă ĕçе юратса тăвакан колхозниксене хавхалантарать. Çав вăхăтрах, хăшпĕр колхозниксене сахалтарах ĕçлесе ытларах илме тăрăшакансене, вăхăтра чарма кирлĕ мерăсем йышăнать.

Халĕ колхозсем умĕнче çĕнĕ те пысăк задачăсем тăраççĕ. Коммунистсен партийĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур халăха КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлама мобилизацилет. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозсене ертсе пырас ĕçре шанчăклă, пуçаруллă руководитель пулмалла. Колхоз руководителĕсен кадрĕсене çирĕплетни ял хуçалăхĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, юлса пыракан колхозсене малта пыракансен шайне çитерме пулăшать.

Анчах та колхозсене ертсе пыракан кадрсемпе çирĕплетес ĕç чылай районсенче начар тăрать-ха. Пирĕн республикăра 14 колхозра кăна председатель пулса аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă, 90 колхозра вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă ял хуçалăх специалисчĕсем ĕçлеççĕ.

Колхоз председателĕсем пулма кадрсем суйласа илес ĕçе çителĕксĕр туса пынă пирки вĕсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа республикăри 289 колхозра председателĕсене улăштарнă.

Колхоз председателĕсем çакăн пек улшăнса тăни мĕнрен килет-ха? Чылай парторганизацисенче партилле-организацилле ĕçе хуçалăх задачисемпе кирлĕ пек çыхăнтарса пымаççĕ. Политикăлла ĕçе хуçалăх строительствин кулленхи ĕçĕсенчен уйрăм туса пыраççĕ. Колхозсене ертсе пыма опытлă руководительсем, ĕçре тĕрĕсленнĕ, тÿрĕ кăмăллă, ĕçе организацилеме пултаракан кадрсем суйласа илесси çине вырăнти партипе совет органĕсен руководителĕсем час-часах формально пăхаççĕ. КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕсем колхозсенчи руководительсен кадрĕсене суйласа илесси, воспитани парасси çине тимлĕн пăхмаççĕ. Чăваш АССР Ял хуçалăх министерстви те ку ĕçре тăрăшни палăрмасть. 1951 çултан пуçласа 1953 çулччен Чкаловски районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра председатель пулса Мускаври ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă агроном О. З. Захарова юлташ ĕçленĕ. Çамрăк специалист, КПСС членĕ Захарова юлташ çак ĕçре мĕнпур вăй хурса, хăйĕн пĕлÿлĕхĕпе усă курса ĕçленĕ вăхăтрах, Чкаловски районĕнчи ертсе пыракан органсем тивĕçлипе хакламаннине пула, Захарова юлташăн урăх колхоза агроном пулса ĕçлеме куçма тивнĕ.

Колхоз руководителĕсен кадрĕсене, уйрăмах председательсене, хатĕрлесси вăхăтлăх ĕç шутĕнче пулмалла мар. Ку ĕçе кашни кун туса пымалла. Вăл государство умĕнче тăракан паха ĕç пулса тăрать. Партипе совет органĕсен тивĕçĕ колхоз руководителĕсен кадрĕсене çирĕплетесси, колхоза ертсе пыма политикăпа ĕçлĕх тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленнĕ, ял хуçалăхĕн аслă шкулĕсемпе вăтам шкулĕсенчен вĕренсе тухнă квалификациллĕ специалистсене уйăрса лартма тăрăшасси пулать.

Парти организацийĕсен колхоз председателĕсене пур енчен те пулăшу парса тăмалла. Пулăшмалли паха меслетсенчен пĕри вăл малта пыракан председательсен опытне анлăн сарни пулать. Колхоз руководителĕсен кадрĕсемпе куллен ĕçлемелле, вĕсене вĕрентмелле, малта пыракан колхозсен хуçалăхĕпе, унти йĕркесемпе тĕплĕн паллаштармалла.

Колхоз председателĕн ĕçĕ анлă та кăткăс. Вăл коллективлă хуçалăха ертсе пырать, артель членĕсен пĕрлехи пухăвĕ—артелĕн чăн-чăн хуçи хушнине пурнăçлать. Председатель колхоз демократине пăсмасăр, правлени членĕсемпе, колхоз активĕпе килĕшсе ĕçлесен кăна хуçалăха ăнăçлăн ертсе пыма пултарать. Партипе совет организацийĕсем председателе куллен пулăшса пырсан, унăн ĕçĕ ăнса пырать, малалла каять.

Халĕ колхозсем умĕнче ответлă задачăсем тăраççĕ. Общественла выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса хĕл каçармалла, çуракн валли таса вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлемелле, агротехникăлла ĕçсене пурнăçламалла. Çак пысăк ĕçсене колхоз председателĕн пуçаруллă ертсе пымалла.

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Председательне Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председательне МАО ЦЗЭ-ДУН юлташа

Хаклă Мао Цзэ-дун юлташ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ Сире, Китайри Коммунистсен партийĕн кĕрешÿре тĕрĕсленнĕ руководительне тата Китай халăхĕн çулпуçне, тăванла коммунистла салам яраççĕ.

Сирĕн пĕтĕм пурнăçăр Китай халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан Китайри Коммунистсен партийĕн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕр уйрăлми çыхăнса тăрать. Çав кĕрешÿ Китай халăхĕ историлле аслă çĕнтерÿ тунипе—Китай Халăх Республикине тунипе вĕçленчĕ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Китай халăх демократи государстви пĕтĕм тĕнче арени çине тухрĕ тата мирпе демократи лагерĕн хăватлă вăйĕ пулса тăчĕ.

Шалти реакцин вăйĕсене хирĕç тата империализмла пусмăра хирĕç йывăр кĕрешÿ пынă çулсенче тата халĕ Центральнăй Халăх Правительствин Председателĕ пулса ĕçленĕ чухне, Эсир яланах хăвăрăн пĕтĕм вăя халăхшăн ĕçлеме, ĕççыннисен ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн, социализмшăн кĕрешме панă тата паратăр. Марксистла-ленинла теорие империализма хирĕçле Китайри революцин практикипе, çĕнĕ, халăх демократиллĕ Китай тăвас ĕçпе çыхăнтарассине Эсир ăслăн пурнăçласа пыратăр, марксизм-ленинизм вĕрентĕвне творчествăлла аталантартăр, китай халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи ĕмĕрлĕх туслăх ялавне тытса пыратăр.

Сире, хаклă тусăмăр тата юлташăмăр, Мао Цзэ-дун, аслă Китай халăхĕн телейĕшĕн, Китай Халăх Республикин ырлăхĕшĕн тата унăн чечекленĕвĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери мир ырлăхĕшĕн нумай çулсем пурăнма, вăйлă та сывлăхлă пулма чунтан-чĕререн ырă сунатпăр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ.

Китайăн суту-илÿ делегацийĕн пуçлăхĕ Мускава килнĕ

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Мускава Китайăн суту-илÿ делегацийĕн пуçлăхĕ—Государство Администраци Совечĕ çумĕнчи Финанспа Экономика Комитечĕн председатель заместителĕ тата Китай Халăх Республикин Тулашри суту-илÿ министрĕ Е Цзи-чжуан килсе çитнĕ. Вăл Мускава ССР Союзĕпе Китай Халăх Республики хушшинчи 1954 çулхи тавар çаврăнăшĕ çинчен калаçусем ирттерме килнĕ.

Е Цзи-чжуана аэродромра СССР Тулашри суту-илÿ министрĕн заместителĕ С. А. Борисов тата Тулашри суту-илÿ министерствин ответлă работникĕсем кĕтсе илнĕ.

Е Цзи-чжуана çавăн пекех Китай Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Вăхăтлăх Поверенныйĕ Гэ Бао-цюань, унпа пĕрле Китай Халăх Республикин Посольствин членĕсем тата Китайăн суту-илÿ делегацийĕн членĕсем кĕтсе илнĕ.

Искусствăпа литература енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра

Искусствăпа литература енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет 1953 çулшăн Сталинла преми илме тăратакан ĕçсене пăхса тухма йышăнать.

Комитетра пăхса тухма общественность пысăк хак панă искусствăпа литературăн питтĕ паллă произведенийĕсене йышăнаççĕ, çав ĕçсене Сталинла преми илме общественла тата творчествăлла организацисем, министерствăсем, ведомствăсем тата наука учрежденийĕсем тăратаççĕ.

Сталинла премисем парасси çинчен калакан сĕнÿсене 1954 çулхи февралĕн 1-мĕшĕччен çак адреспа ямалла: Мускав хули, Художественнăй театр проезчĕ, 3-А çурт, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствăпа литература енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Берлинри канашлăвне пухасси çинчен

Декабрĕн 8-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен Министерстви Франци, Англи тата США Правительствисенчен пĕр пек нотăсем илнĕ, вĕсене Совет Правительстви ноябрĕн 26-мĕшĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвне пухасси пирки çырса янă нота çине ответлесе ярса панă.

Декабрĕн 26-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Франци, Англи тата США Посольствисене Совет Правительствин ответлă нотине ярса панă.

Аяларах Франци Правительстви 1953 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче ярса панă нота текстне тата Совет Правительствин 1953 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи нотин текстне пичетленĕ.

Франци Правительстви 1953 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче ярса панă нота

Франци Посольстви хăй Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствине хисепленине çинчен калать тата ăна çакăн çинчен пĕлтерет:

Франци Правительстви çакна кăмăлласа палăртать—халĕ ĕнтĕ Совет Правительстви, хăй ноябрĕн 26-мĕшĕнче ярса панă нотăра каланă тăрăх, Францин, Пĕрлешÿллĕ Королевствăн, Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвне хутшăнма хатĕр. Вăл ку канашлу ирĕклĕх условийĕсенче Германие пĕрлештерме тата Австрипе государство договорĕ тума май парĕ, тесе шанса тăрать.

Франци Правительстви çапла шутлать: Германи тата Австри ыйтăвĕсене, уйрăмах хăвăрт татса памалли çак ыйтусене, йĕркелес ĕçре ăнăçлипех малалла кайни тĕнчери ытти пысăк ыйтусене, вăл шутра Европăри хăрушсăрлăх ыйтăвне те, татса пама пулăшĕ. Çакна май Франци Правительстви çĕнĕрен çирĕплетсе калать—ирĕклĕ çĕршывсем хăйсен ирĕкĕпе Атлантика Союзне пĕрлешни, çавăн пекех тата Европăри тĕрлĕ государствăсем хăйсен пĕтĕм пурнăçне лайăхлатас, хăйсемшĕн хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе пурнăçласа пыракан политика оборона тĕллевĕ тытать тата мир ĕçне коллективлă вăй хуни пулать.

СССР Правительстви пилĕк держава конференцине пухма май пурри пирки сÿтсе явма шутлани çинчен пĕлтерчĕ. Ют çĕршыв ĕçĕсен тăватă министрĕн канашлăвĕ пухăнсан, вăра унта хутшăнакан кашни Правительство ку ыйтупа хăйĕн шухăшне калаcа пама пултарĕ.

Франци Правительстви, Германири федеральнăй правительствăпа тата Германин Берлинри влаçĕсемпе канашланă хыççăн, ют çĕршыв ĕçĕсен тăватă министрĕн канашлăвне 1954 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче Берлинра Союзлă Контроль Совечĕ ĕçленĕ çуртра пуçлама сĕнет.

Совет Правительстви 1953 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче янă нота

Совет Правительстви Франци Правительстви декабрĕн 8-мĕшĕнче янă, Совет Правительстви çак çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче ярса панă нота çине ответлесе çырнă нотăна илни çинчен пĕлтерет.

Франци Правительстви Францин, ССР Союзĕн, Англин тата США-н ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвне пухма килĕшнине Совет Правительстви асра тытма йышăнать.

СССР Правительстви ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвне пухас ыйтупа хăй малтанах вăхăтра мĕн каланине тепĕр хут çирĕплетсе калать. Вăл ку канашлу пĕлтерĕшĕ çине çак енчен пăхать: канашлăва хутшăнакансем пурте çавна тума тăрăшсан, тĕнчери хăру-тăрури йывăрлăха чакарма май пулнă пулĕччĕ тата Европăра хăрушсăрлăх туса хуни, Германи милитаризмĕ каллех вăйланас хăрушлăха сирсе яни кирлĕ.

Франци Правительстви Китай Халăх Республики хутшăннипе пилĕк держава канашлăвне пухасси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма килĕшнине Совет Правительстви палла тăвать; пилĕк держава ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ, паллах ĕнтĕ, тĕнчери халех татса памалли ыйтусене йĕркелеме пурнинчен ытларах пулăшнă пулĕччĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвне тивĕçлĕн хатĕрлени кирлине, çавăн пекех тата пур правительствăсене те çак канашлăва хутшăнма тивĕçлĕ условисем туса пани питĕ кирлине шута илсе, Совет Правительстви 1954 çулхи январĕн 25-мĕшĕ е ун хыççăнхи кирек хăш кун та çак канашлăва пухăнма юрăхлă дата пулать, тесе шутлать.

Асăннă канашлу пулмалли çурта кирĕ пулсан, ку ыйтăва тăватă державăн Берлинри верховнăй комиссарĕсем пĕр-пĕринпе килĕшсе татса парсан лайăхрах пулнă пулĕччĕ.

Совет Правительстви çакăн пек нотăсем Англи тата США Правительствисене те ярса панă.

Çуркунне акма паха вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлер!

Шупашкар районĕнче васкамаççĕ

КУКЕÇ. Районти колхозсенче кăçал çуракине вăхăтра тата кăтартуллă хатĕрленесе çитме пур майсем те пур. Колхозсем начар мар тырпул туса илчĕç, ял хуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕç, вăрлăх фондне те кирлĕ таран хывса хăварчĕç. Апла пулин те районта çуракине хатĕрленес ĕç пачах çителĕксĕр пырать. Чылай колхозсем вăрлăх фондне хывса çитернипе лăпланса ларнă. Ăна тасатса акма юрăхлă кондицие çитерме васкамаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç уйрăмах «Красное знамя», «Правда» колхозсенче япăх пырать. Асăннă колхозсем ку таранча çитсе те вăрлăх фончĕ хывса çитермен. «Правда» колхозăн 10 центнер кантăр вăрри, 6 центнер нумай çул ÿсекен курăк вăрри çитмест. Хрущев ячĕпе, Каганович ячĕпе тăракан тата «Актив» колхозсем клевер вăрлăхне шĕкĕлчемен. Ытти вăрлăхсене те тасатма тытăнман. Ял хуçалăх машинисене юсамаççĕ.

Колхозсенче нумай çул ÿсекен курăксен вăрри 50 процент, кантăр вăрри 80 процент кăна хывнă.

Вăрлăх улăштарса илес ĕç те çителĕксĕр пырать. Пĕтĕмпе 4.000 центнер вăрлăх улăштармалла пулсан, паянхи куна пĕр центнер вăрлăх та улăштарман.

МТС-ра тракторсемпе ял хуçалăх машинисем юсас ĕç кирлĕ пек пулса пымасть. Тăваттăмĕш кварталта тракторсем юсамалли плана 60 процент, сеялкăсем юсамалли плана 80 процент, çĕрулми лартмалли машинăсем юсамалли плана 50 процент кăна тултарнă.

Райсовет исполкомĕ те çуракине хатĕрленес ĕç колхозсенче мĕнле пынипе сахал интересленет. Хăйĕн ларăвĕнче ку ыйту тăрăх колхоз председателĕсен отчечĕсене итлемест.

Я. НИКИТИН.

Кашни колхозăн вăрлăх çителĕклĕ пултăр

КАЛИНИНО. Вăйлă тырпул туса илессине агротехникăна тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçлани татса парать. Çак ĕçсенчен пĕри таса та тутă вăрлăх хатĕрлесси пулать.

Районти колхозсем çуракине начар хатĕрленеççĕ, уйрăмах, акмалли вăрлăха тасатса сортлас ĕç чăтма çук япăх пырать. Тырпул пухса кĕнĕ вăхăтрах çителĕклĕ таран вăрлăх хывса хăвармаллаччĕ, анчах паянхи куна «1-ое Мая» тата ытти хăш-пĕр колхозсенче те вăрлăх нумай çитмест. Колхозра çуракине хатĕрлени нихăш енчен те курăнмасть.

Районти колхозсенчен çуррине яхăн вăрлăха акма юрăхлă кондицие çитермен. Вăрлăха тасатса сортлас ĕç çине МТС руководителĕсем питĕ те сÿрĕн пăхаççĕ. МТС-ри машинăсемпе сахал усă кураççĕ. МТС-ăн виçĕ сортировкинчен пĕрипе кăна Хрущев ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеççĕ, иттисем иккĕмĕш çул ĕнтĕ, Ленин ячĕпе тата Шверник ячĕпе тăракан колхозсенче усăсăр лараççĕ.

26 колхозран çиччĕшĕнче çес çуракине акма кирлĕ таран вăрлăх хатĕрленĕ. Ытти колхозсенче сортлă вăрлăхсем çитмеççĕ. Вăрлăх улăштарса тумасси вăраха юлса пырать. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз районти колхозсене сортлă вăрлăх çителĕклех улăштарса пама пултарать, анчах улăштарма пыракансем çук.

Пĕр çул тата нумай çул ÿсекен курăк вăрлăхĕ хатĕрлес ĕç кунтан та япăхрах пырать. Районти пĕр колхозра та çав вăрлăхсене кондицие çитермен. Вăрлăхшăн тăрăшман пирки ĕнтĕ курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем йĕркелесе çитеймеççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозăн курăк акмалли пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитерме 1954 çулта 160 гектар яхăн курăк акмалла. Ку лаптăка акса хăварма та вăрлăх çитмест. Ăна сутăн илме е улăштарма шутламаççĕ. Кун пек тĕслĕхсем пĕр колхозра кăна мар.

Вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен станци çителĕксĕр ĕçленине те палăртмалла. Унăн колхозсенчи ял хуçалăх специалисчĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлемелле. Анчах çак çыхăну пулни курăнмасть.

КПСС райкомĕпе райисполкомăн, МТС дирекцийĕн КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление çăмăлтан мар, ĕçпе пурнăçлас тĕлĕшпе хăлех татăклă мерăсем йышăнмалла.

М. ВАСИЛЬЕВ.

„Прогресс“ колхозра

ЧУРАЧĂК. «Прогресс» колхоз пилĕк пĕчĕк колхозсенчен пĕрлешсе пысăкланнă. Телейлĕ те савăнăçлă пурăнаççĕ çак колхоз ĕçченĕсем. Именкасси ГЭС-ĕнчен килекен электричество колхозниксен килĕсене çутатать. Кашни килте радио. Ял варринчи клубра колхозниксем пуçтăрăнса вăхăта савăнăçлă ирттереççĕ.

Колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. А. Яковлев ертсе пыракан бригада кашни гектартан 17-шер центнер ыраш, 240-шер центнер çĕрулми туса илнĕ.

Кăçал колхозниксем саман кирпĕчрен выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем турĕç. Пĕтĕмпе 45 пин штук самам кирпĕч тунă.

«Прогресс» колхоз государствăна районта чи малтан тырпул, çĕрулми, аш-какай, сĕт, çăмарта парса татрĕ.

Халĕ колхозниксем çитес çул пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Трак разъездĕнчен минераллă удобренисем турттараççĕ, уй çине кăлараççĕ.

Л. КУЗЬМИН.

Хăмларан пысăк тупăш

ОКТЯБРЬСКИ. Максим Горький ячĕпе тăракан ял хуçалăх артелĕ кăçал пысăк тухăçлă хăмла туса илнĕ. Пилĕк 2,5 гектар çинчен 13 центнер хăмла туса илнĕ пулсан, кăçал вăл хут ытларах туса илнĕ. Колхоз государствăна хăмла панăшăн 48 пин тенкĕ укçа илнĕ.

Çак кунсенче хăмла ÿстерес тĕлĕшпе ĕçленĕ колхозниксене хушса тÿлевсем йĕрсе укçа пачĕç. Н. Семенов бригади 664 тенкĕ, Т. Григорьева, Е. Наумова, Ф. Евграфова, А. Михайлова тата ытти колхозниксем 300—400-шер тенкĕ илчĕç. Колхозниксене хăмла ÿстернĕ [illegible] ĕçленĕшĕн пурĕ 9.000 тенкĕ ытла илнĕ.

Д. АЛЕКСЕЕВ.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

1953 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче Улатăрта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председатель заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ ССР Верховнăй Совечĕн Указĕсем тăрăх награда илнĕ çынсене орденсемпе медальсем панă.

Ачасене вĕрентес ĕçре нумай çул хушши тата лайăх ĕçленĕшĕн Улатăрти 7-мĕш вăтам шкулăн вĕренÿ пайĕн заведующийĕ В. Д. Распопова юлташ Ленин орденĕ, Куславкка районĕнчи Березово-Майданри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница К. С. Шляпина юлташ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ тата ытти те.

Улатăр, Куславкка, Шăмăршă районĕсенчи шкулсенчи учительсемпе учительницăсенчен чылайăшне «Ĕçри хастарлăхшăн» тата «Ĕçре палăрнăшăн» медальсем панă.

Финанспа кредит ĕçĕнче нумай çул хушши тата лайăх ĕçленĕшĕн Улатăр районĕнчи финанс пайĕн заведующийĕ П. Е. Иванов юлташ Ленин орденĕ илнĕ.

Вăрмана промышленноçĕнче нумай çул хушши тата лайăх ĕçленĕшĕн орденсемпе медальсем панă.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Çĕмĕрлере халăха вĕрентес ĕçри, финанспа кредит ĕçĕнчи, чугун çул çинчи тата вăрман промышленноçĕнчи работниксен ушкăнне орденсемпе медальсем панă.

Ялти гидроэлектростанцисем валли

СВЕРДЛОВСК. (ТАСС). Уралти гидромашинăсем тăвакан завод кăçал колхозсенчи электростанцисем валли гидротурбинăсем туса кăларассине чылай ÿстернĕ. Çак машинăсене 1952 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах туса кăларнă.

[illegible]

Уралти завод работникĕсем 1954 çулта производство çурчĕсене пысăклатмасăрах, ял хуçалăхĕ валли машинăсем туса кăларассине чылай ÿстерме пулнă. Çĕнĕ çулта машинăсем туса кăларасси 70 процент чухлĕ ÿсет. Лайăхрах гидротурбинăсем туса кăларма пуçланă. Вĕсем пысăк тухăçлă ĕçлеççĕ.

Хуçалăх тĕрекленсех пырать

ПЕРВОМАЙСКИ. «Красная нива» колхоз членĕсем тырпул тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Çавна май колхозăн общественла хуçалăхĕ тĕрекленсе, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланса пырать.

Колхоз ялĕнчи çулсенче тенкĕ [illegible] çĕнĕ питĕ турĕ. Хăма сурмалли рама лартрĕ. Унăн виçĕ автомобиль, икĕ автомашина пур. Халĕ электростанци тăваççĕ.

Колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх тырпул тата укçа-тенкĕ нумай илеççĕ. Кăçал колхозра тăрăшса ĕçленĕ С. Леонтьев колхозник çемйи 200 пăт, К. Мухтачева çемйи 250 пăт, Н. Беляев колхозник—195 пăт тыр тата 7—8-шар пин тенкĕ укçа илеççĕ.

Ф. ВАСИЛЬЕВ.

Халăх тăшманĕсем пирки йышăннă приговора Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем ырлаççĕ

* * *

Партин, правительствăпа халăхăн пĕрлĕхĕ

Кăнтăрлахи смена вĕçленнĕ хыççăн Мусавăри Сталин ячĕпе тăракан автомобильсем тăвакан заводри мĕнпур цехсенче пухусем пулса иртнĕ. Пухусенче СССР Верховнăй Сучĕ пĕлтернине вуласа панă.

Инструментальщиксемпе станок тăвакансен пухăвĕнче шлифовщик Христофоров юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

— СССР Верховнăй Сучĕн приговорĕ—пĕтĕм халăх приговорĕ. Ирсĕр сутăнчăксем пирĕн çĕршывра капитализма каялла тавăрма, ирĕке юратакан совет халăхне чуралăха кĕртсе ÿкерме шутланă. Ĕç тухмарĕ! Вĕсен ĕçĕ нихçан та пурнăçланмĕ! Совет çĕрне çак сутăнчăксенчен тасатнă.

Токарь Шишин юлташ чун-чĕререн тухакан сăмахсемпе калать. Вăл çакăн çинчен аса илтерет: çак кунсенче çĕршывăн мĕнпур кĕтесĕсенчен халăхăн пĕр кăмăллă требованийĕ илтĕнсе тăчĕ. Халăх сутăнчăксене хытă айăплама ыйтрĕ. СССР Верховнăй Сучĕ преступниксене чи пысăк наказани памалла туса приговор йышăнчĕ; вĕсене персе вĕлермелле турĕ. Приговора пурнăçа кĕртнĕ.

— Сутăнчăк Берияпа унпа пĕр каварлăхсен ĕçĕ,—тет вăл,— коммунизм патне çĕнтерÿллĕн пыма пире чăрмантарма хăтланакансемшĕн урок пултăр.

— Эпир Совет влаçĕ тунă, ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне çирĕплетсе пынă, хамăр çĕршывра социализм туса хунă,—тет Михайличенко фрезеровщик.— Анчах эпир çакна ирсĕр сутăнчăксем пирĕнтен туртса илччĕр тата капитализм йĕркесене тепĕр хут туса хуччăр тесе туман. Совет сучĕ ирсĕр тăшмансене пĕтерсе хартрĕ. Эпир çак тĕрĕс приговора пĕтĕм чун-чĕререн ырлатпăр.

Автозаводра ĕçлекенсен пухăвĕ коллектив Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, вăл пирĕн юратнă Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетессишĕн, КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тата хастарлăрах ĕçлеме хатĕр пулнине кăтартса панă. (ТАСС).

Пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ

ТБИЛИСИ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Грузи халăхĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ сутăнчăк Берияна тата унăн сутăнчăкла каварçăсен ушкăнĕнче пулнă çынсене чи пысăк наказани памалла—персе вĕлермелле туса приговор йышăнни çинчен тата приговора пурнăçа кĕртни çинчен пĕлтернине пĕр кăмăллă пулса ырласа кĕтсе илнĕ.

Предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче, республикăри совхозсемпе МТС-сенче нумай çынлă пухусем пулса иртнĕ. Ĕççыннисем ют çĕршыв капиталĕн агенчĕн Берийăн тата унпа пĕр каварлă пулнисен ирсĕр ĕçĕсем çинчен чунтан тарăхса каланă.

Бакури 26 комиссар ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан завод коллективĕн шухăш-туйăмĕсене палăртса, слесарь Овромчеллишвили юлташ çапла каланă:

— Халăх ыйтни пурнăçланчĕ, пирĕн Тăван çĕршывăн ылханлă тăшманне Берияна тата унпа каварлă пулнисене тĕп тунă. Сутăнчăк Берия хăйĕн юнлă шайккипе пĕрле влаçа хăйĕн аллине тытса илме, рабочисемпе хресченсен советла стройне пĕтерме тата пирĕн çĕршывра буржуаци пуç пулса тăмалла тума хăтланнă. Çакна палăртнă: 1920 çултах, Грузире пулнă чухне, Берия Грузири меньшевиксен правительствăн охранкипе, Англи разведкин филиалĕ пулса тăнăскерпе, вăрттăн çыхăну тытнă. Шпионсемпе провокаторсен ирсĕр планĕсем путланса ларчĕç. Тăван çĕршыва сутакансене çĕр çинчен шăлса парахнă! Тăшмансем çакна пĕлсе тăччăр: совет халăхне коммунизм строительствинче чăрмантарма пултаракан вăй çук. Эпир революциллĕ сыхлăха ÿстерсе пырăпăр, пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне ывăнма пĕлмесĕр ÿстерĕпĕр.

Сигнахски районĕнчи Тибаански МТС-ĕн коллективĕн пухăвĕнче Натрошвили трактористка çапла каланă:

— Совет халăхĕн ылханлă тăшманĕсем, пĕтĕм тĕнчери империализмăн агенчĕсем—Берия тата унпа пĕр каварлисем—пирĕн нумай нациллĕ çĕршыври халăхсем хушшинче кураймалăх сарасшăн, ССР Союзĕнчи халăхсемпе аслă вырăс халăхĕ хушшинчи туслăха хавшатасшăн пулнă. Çак плав путланса ларчĕ. Урăхла пулма та пултарайман! Пирĕн советла стройăн вăй-хăвачĕ тĕреклĕ, халăхсен туслăхĕ çирĕп! Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕпе пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем куллен пулăшса пынипе, Грузи экономикăпа культурăна аталантарас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ. Совет çĕршывĕ тата хăватлăрах пултăр тесе, эпир хамăр вăйхала шеллемесĕр ĕçлĕпĕр.

Йытта—йытă вилĕмĕ!

Эпир ачаран çакна аслăватпăр: ала урнă йытă пырса кĕрсен, ăна е çакса вĕлереççĕ, е персе пăрахаççĕ. Берияпа унăн хÿрешкисене, йытăсем кÿренмесен, вăрттăн çыртма хапсăнакан урнă йытăсемпе танлаштарас килет.

Вĕсем, этем сăнне сухатнă киревсĕрсем, пирĕн аслă халăх юн тăкса илнĕ ирĕклĕ пурнăçа, рабочисемпе хресченсен влаçне хăйсен чыссăр аллине илсе, ĕлĕкхи пусмăрлă саманана каялла тавăрасшăн пулнă. Анчах истори урапи каялла çаврăнмасть. Пирĕн халăх, çулсерен çĕнĕ çитĕнÿсем туса, хĕвеллĕ коммунизмăн анлă çулĕпе малалла пырать.

Вĕсем, йĕксĕк сутăнчăксем, пирĕн ĕççынни те ырă кăмăллă совет халăхне тата мухтавлă та илемлĕ çĕршывăмăра хапсăнчăк империалистсене сарă ылтăнла сутса ярасшăн пулнă. Анчах темиçе вăрçă вутçулăмĕ витĕр паттăррăн çĕнтерсе тухнă пирĕн халăхпа çĕршыв нихçан, никама парăнман, парăнас та çук!

Вĕсем, халăхăн кураймин тăшманĕсем, Коммунистсен партийĕ нихçан аркаймин союза пĕрлештернĕ халăхсен туслăхне аркатса, халăхпа халăха хирĕçтерсе ярасшăн пулнă. Анчах пирĕн социализмла нацисен çирĕп туслăхне тата аслă вырăс халăхĕпе ĕмĕртен пыракан ытарайми туслăха пĕтерес çук — вăл вăйлă, хавшатайми хăватлă!

Пĕтĕм совет халăхĕ ыйтнипе, тÿрĕ Совет Сучĕ Берияпа ун хÿрешкисене тĕрĕссипе сул турĕ. Тăшмансен шалчи тулчĕ! Урнă йытăсене—йытă вилĕмĕ!

М. УЙАП. В. АЛАГЕР.
А. АЛГА. Г. ЕФИМОВ.

* * *

Наука работникĕсен сăмахĕ

Чăваш АССР Ялхуçалăх институтĕнчи профессорсемпе преподавательсен тата студентсемпе служащисен пухăвĕнче биологи наукисен докторĕ профессор А. Плетнев юлташ çапла каларĕ:

— Халăх тăшманĕ Берияна тата унăн сутăнчăкла ушкăнĕнче пулнă ытти каварçăсене тивĕçлипе айăпланă. Çак ирсĕрсем ултавлă майпа руководствăна хĕсĕнсе кĕнĕ, пирĕн совет стройĕн хăватне хавшатма, совет çыннисене капитализм пусмăрне кĕртсе ÿкерме тĕллев тытнă. Институтри наука работникĕсемпе студентсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, авантюристла йĕрĕнчĕксем пирки йышăннă приговора чун-чĕререн ырлаççĕ. Эпир революциллĕ сыхлăха татах ÿстерĕпĕр, ĕçре çĕнĕ ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешĕпĕр.

Доцент Н. Владыкин, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ М. Алеева, Чусовский юлташсем те урăх çĕршывсенчи империалистсене сутăннă преступниксене тивĕçлĕ наказани панине ырларĕç.

— Эпир, совет çамрăкĕсем, телейлĕ те савăнăçлă çĕршывра пурăнатпăр. Анчах çак телее тăшмансем пиртен туртса илесшĕн пĕтсĕр ĕçсем тунă. Çĕлен-калтасен вăрă-хурахла шайккине аркатса тăкнă. Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине çакăншăн пите пысăк тав,—терĕ Комаров студент.— Тăшмансем çакна яланах пĕлсе тăччăр: коммунизм обществи тăвакан çĕршыври халăхсен пĕрлĕхне, вĕсен туслăхне нимĕнле майпа та хавшатма çук. Эпир, партипе правительство тавра тачăрах пĕтĕçсе, хамăр Тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн, Совет Союзĕн мухтавĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.

Пухура пулнисем, пурте пĕр кăмăллă пулса, Берияпа унăн сутăнчăкла ушкăнĕ пирки йышăннă приговора ырларĕç, ĕçре çĕнĕ ÿсĕмсем тума пулчĕç.

Халăх ылханать

КАНАШ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари предприятисемпе учрежденисенче пухусем пулса иртеççĕ.

Чугун сул çинче ĕçлекенсен нумай çынлă пухăвĕнче Федоров весовщик сăмах илсе çапла каларĕ:

— Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Çавна пула пирĕн çĕршыври халăхсем телейлĕ пурăнаççĕ Берия тата унпа пĕр каварлă пулнă йытăсем, ют çĕршыв капитализмне сутăнса, пирĕн халăхăн телейлĕ пурнăçне туртса илме, ĕççыннисене каллех пусмăр айне кĕртсе ÿкерме ĕмĕтленнĕ Анчах ирсĕр тăшмансен шалчи тулчĕ. Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тăрăшнипе тăшмансене тăрăшыв çине кăларнă. Совет Сучĕ вĕсене пĕрсе вĕлерме приговор йышăнчĕ. Çакă вăл халăх приговорĕ, халăх интересĕсене сыхлакан закон приговорĕ.

Поездсен составĕсене тăвакан Андреев юлташ сăмах илсе, Берияпа унăн сутăнчăксен ушкăнĕнче пулнисене чĕререн тарăхса питлерĕ.

— Пĕтĕм совет халăхĕ коммунизм обществи туса çитерессишĕн ырми-канми ĕçленĕ вăхăтра,—тет вăл,—çак ирсĕрсем Тăван çĕршыв, тăван халăх интересĕсене сутса пурăннă. Вĕсем Тăван çĕршыва хирĕç провокациллĕ ĕçсем тунă. Вĕсем империалистсен шпионĕсем, агенчĕсем, тарçисем пулса тăнă. Çак сутăнчăксене вăхăтра тытса, сул умне тăратни тата приговорне çийĕнчех пурнăçа кĕртни халăх ирĕкне пурнăçлани пулчĕ. Çавăншăн эпир савăнатпăр. Пирĕн чечекленекен Тăван çĕршывра тăшмансем валли вырăн та, сывлăш та пулас çук.

Пухура Осипов, Михеев, Зариков тата ытти юлташсем те тухса каларĕç. Пухура пулнисем, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсем çине ответлесе, тата лайăхрах ĕçлеме, революциллĕ сыхлăха вăйлатма пулса резолюци йышăнчĕç.

Пирĕн çĕршывра тăшмансем валли вырăн çук

ИШЛЕЙ. Декабрĕн 24-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче МТС механизаторĕсемпе район центрĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта 200 çын ытла пулчĕ. КПСС райком секретарĕ С. Самсонов юлташ СССР Верховнăй Сучĕ пĕлтернине вуласа пачĕ.

— СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ халăх тăшманĕ Берияпа унпа пĕр каварлисене тивĕçлипе айăпласа ответ тыттарчĕ. Çакăншăн эпир Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине чĕререн тав тăватпăр. Коммунизм тăвакан совет халăхĕн тăшманĕсене пирĕн çĕршывра нихçан та, нипле вăрçăру та пулас çук! Çакăн çинчен тăшмансем яланах аса тытчăр,— тет юлашкинчен Самсонов юлташ

Трибуна умĕнче Ишлейри вăтам шкул учительници М. Шумилова юлташ.

— Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн ĕççыннисене ырă та савăнăçлă, ирĕклĕ пурнăç туса пачĕç. Совет Союзĕнчи халăхсем туслă çемьере пурăнса коммунизм тăваççĕ. Анчах халăх тăшманĕ Берияпа унпа пĕр каварлă пулнă этем сăнне çухатнă ирсĕрсем пирĕн халăхсене капитализм чурисем тума ĕмĕтленнĕ, пирĕн аслă правăсене, эпир çĕнсе илнисене путарса лартма, халăхсен туслăхне аркатма шутланă. Вĕсен ирсĕр ĕçĕ путланчĕ! Преступниксене персе вĕлернĕ. Вăл çавăн пек пулмалла та. Мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра тăшмансем валли вырăн çук!—тет вăл.

Пухура ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Михайлов, МТС механикĕ Корсаков, районти больница врачĕ Гуткова, МТС-ри комсомол комитечĕн секретарĕ Шляхин юлташсем хĕрÿллĕ сăмахсем тухса каларĕç.

Пухура пулнисем, пурте пĕр шухăшкăмăллă пулса, СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ йышăннă приговора пĕтĕм халăх приговорĕ тесе ырласа резолюци йышăнчĕç. Çав резолюцире вĕсем хăйсен реçĕсене Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçтерни, революциллĕ сыхлăха çÿлти пусăмра тытса пыма пулни тата хамăр çĕршывра коммунизм тăвассишĕн малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хатĕр пулни çинчен пĕлтереççĕ.

Хальхи вăхăтра районти предприятисемпе колхозсенче ĕççыннисен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Вăрман хатĕрлекенсемшĕн ытларах тăрăшмалла

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви вăрман хатĕрлекенсен пурнăçне йăла тата культура условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Ана хамăр республикăри тĕслĕхсенчен те курма пулать.

«Чувашлес» треста пăхăнса тăракан Улатăр вăрманпромхозĕ кăçал виçĕ общежити, икшер хваттерлĕ 12 çурт, овощехранилище, апат-çимĕç склачĕ, радиоузел, больница туса лартнă. Çитес вăхăтра мунча (унта дезокамера пулать) тата прачечнăй туса пĕтерессĕ. Рабочи поселоксенче клубсем, хĕрлĕ кĕтессем пур. Вĕсенче кинокартинăсем час-часах кăтартаççĕ, спектакльсем, концертсем лартаççĕ, художествăлла пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Поселоксене электрификациленĕ, кашни килте тенĕ пекех радио пур. Общежитисенче кроватьсем, матрацсемпе одеялсем, простыньсем çителĕклĕ. Кашни пÿлĕмре шкапсем, тумбочкăсем, сехетсем, тĕкĕрсем пур. Общежитисенче тумтирпе атă-пушмак типĕтмелли сушилкăсем тунă.

Йĕпрес вăрманпромхозĕн Черноречески поселокне илер. Кунта клуб, ача сачĕ тата ясли, фельдшер пункчĕ, мунча, пекарня, магазин, çĕвĕ тата атă-пушмак мастерскойĕсем, парикмахерски пур. Клубра библиотека, вуламалли зал уçнă.

Первомайски вăрманпромхоз 675 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем лартнă, тăваттăшар хваттерлĕ 14 çурт лартма тытăнассĕ. Малашне шкул, ача сачĕ, медицина пункчĕ туса лартма палăртнă

Çавăн пек паха тĕслĕхсем сахал мар. Çапах та чылай вăрманпромхозсенче рабочисен йăлапа культура условийĕсене лайăхлатассишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ. Хваттерсем çитменнипе предприятисем ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ чухлĕ илме пултараймаççĕ, вăхăтлăха пынă колхозниксене лайăх кĕтсе илеймеççĕ. Кăçалхи план тăрăх, треста пăхăнса тăракан предприятисен 6.500 тăваткал метр пурăнмалли çурт тумалла. Çак плана 11 уйăхра 54 процент çеç пурнăçланă. Уйрăмах Бунински вăрманпромхоз директорĕ Гусинов юлташ рабочисемшĕн [illegible] тăрăшнине палăртас пулать. План тăрăх 360 тăваткал метр чухлĕ [illegible] çурт лартмалла пулсан, пĕр çуртне те туса пĕтермен. Вăрнар вăрманпромхозĕнче те ултă çуртран иккĕшне çеç туса пĕтернĕ.

Шăмăршă вăрманпромхоз руководителĕсем рабочисене вырнаçтарма çуртсем çитменнишĕн пăшăрханаççĕ. Вĕсем ыйтнипе трест çулсеренех çуртсем лартма чылай укçа-тенкĕ уйăрса парать. Анчах унпа кирлĕ пек усă курмаççĕ. Пĕр общежити çуртне пĕлтĕртенпе туса пĕтерейменççĕ. 542 тăваткал метр вырăнне икĕ çул хушшинче 120 тăваткал метр чухлĕ çеç пурăнмалли çурт туса пĕтернĕ.

Магазинсемпе лавккасенче тавар çаврăнăшĕ çултан-çул ÿсет. Анчах суту-илÿ предприятийĕсем рабочисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтереççĕ, тесе калама нимпе те май çук.

Сĕмĕрлери ОРС-ăн пиллĕкмĕш магазинĕнче 115 кун хушша брассыв пулман. Уйрăм магазинсемпе лавккасенче час-часах тăвар тата махорка пулмасть. Ăна мĕнпе ăнлантарса памалла? Çак таварсем базăсенче хăçан та складсенче çителĕклĕ. Анчах ОРС руководителĕсем вĕсене вăхăтра турттарса килмеççĕ.

Вăрман хатĕрлекенсем хушшинче суту-илĕве лайăх йĕркелемелле, мĕншĕн тесен чылай рабочисемпе служащисем хуласенчен аякра пурăнаççĕ. Хулара пурăнакансем хăйсене кирлĕ япаласене пĕр магазинта илеймесен ыттисенче тупма пултараççĕ. Пахча çимĕç, апат-çимĕç колхоз пасарĕнче нумай сутаççĕ. Вăрман поселокĕсенче чылайăшĕнче ун пек майсем çук. Çакна суту-илÿ работникĕсем асра тытмаççĕ пулас. Халăхне хăшпĕр çĕрте çеç çĕрулми, пахча çимĕç сутаççĕ. Приволжски вăрманпромхозра ĕçлекенсем çĕрулми илме Шупашкара çÿреççĕ.

Вăрманпромхозсенче тумтир тата атă-пушмак юсакан мастерскойсем пурĕ те тăваттă çеç, парикмахерскисем пилĕк кăна. Пĕнер тата Çарăклă поселокĕнче çĕршер рабочи пурăнать. Унта мастерскойсем çук. Рабочисем костюм е пальто çĕлетме тата юсаттарма Вăрнара е Сĕмĕрлене каяççĕ. Çÿç кастарма е сухал хырттарма вуншар километра çÿреме тивет. Савăт-сапа, сехет, çĕвĕ машинисем юсакан мастерскойсем вара пĕр вăрманпромхозра та çук.

РСФСР Вăрманпа хут промышленность министерствин УРС-ĕ (начальникĕ Никандров юлташ) атă-пушмак тата тумтир юсакан мастерскойсем уçмалли плана çултан-çул тултарса пымасть. УРС тата ОРС руководителĕсен асăннă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле, таварсене йывăç хатĕрлекенсем патне илсе пырса сутас пулать. Рабочисем ĕç укçи нумай илеççĕ. Çĕнĕ техникăпа ĕçленĕ май, вĕсен культурипе тавракурăмĕ те хăвăрт ÿсет. Вĕсем радиоприемниксем, сехетсем, патефонсем, мотоциклсем, музыка инструменчĕсем, паха сĕтел-пукан туянасшăн. Суту-илÿ организацийĕсен рабочисен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтермелле.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине пĕтерес çинчен» йышăннă постановленире йывăç хатĕрлекенсен материальнăй тата культура условийĕсене татăклăн лайăхлатма палăртнă. 1954—1955 çулсенче «Чувашлес» трест енĕпе 14 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем, чылай шкулсем, больницăсем, ача сачĕсемпе яслисем лартма палăртнă.

Рабочисемпе служащисемшĕн куллен тăрăшасси, вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси вăрманпромхозсенчи хуçалăх, парти тата профсоюз организацийĕсен ответлă ĕçĕ. Профсоюз организацийĕсене пысăк право панă: вĕсем столовăйсемпе магазинсен ĕçне, пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй учрежденисем туса лартас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшакан сĕнÿсем пама пултараççĕ. Вăрманпромхозсенчи рабочкомсен çавăнăçусăр, рабочисемшĕн тăрăшман хуçалăх руководителĕсене критиклемелле, строительство планне ăнăçлă тултарма коллектива мобилизацилемелле.

П. ТРОФИМОВ.
«Чувашлес» трест управляющийĕн заместителĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„МТС-ăн договора пурнăçламалла"

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра декабрĕн 15-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн В. Бондратьев юлташăн «МТС-ăн договора пурнăçламалла» ятлă çырăвĕ пичетленнĕччĕ. Унта машина-трактор станцийĕ колхозпа тунă договора чылай ĕçсем енĕпе тултарса пыманнине, колхоза уя тислĕк каларас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата ытти ĕçсене механизацилеме пулăшманнине кăтартса панăччĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Етĕрне район Совечĕн исполкомĕ çырура фактсене тĕрĕс кăтартса пани. МТС ĕçĕнче ун пек çитменлĕхсем малашне ан пулччăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн 1954 çулхи планне тăвас ĕçе МТС специалисчĕсем активлă хутшăннă, плана район Совечĕн исполкомĕпе КПСС райкомĕн бюровĕ ырланă.

МТС агрономĕ Трунковская юлташ Мичурин ячĕпе тăракан колхоза ялан ĕçлеме кайнă.

Пуçламăш парторганизацисен ĕç опычĕнчен

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ÿсĕмсемшĕн

Пирĕн колхозри парторганизаци тырă тухăçлăхне хăпартса пыма вăй хунипе пĕрлех обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн те тимлĕн кĕрешет.

Халĕхе эпир парти организацийĕ хăйĕн умне лартнă задачăна пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пырать теме пултараймастпăр-ха, анчах та ку тĕлĕшпе чылай пысăк утăмсем тунă. Ана çак тĕслĕхсенчен те курма пулать: 1952 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхоз ĕнесенчен 1.233-шер литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçалхи 11 уйăх хушшинче вара 1.390,7-шер литр суса илнĕ. Кăçал вăтам шутпа кашни сысна аминчен 18,5-шер çура илнĕ. Фермăсенчен илекен тупăш та ÿсех пырать. Кăçал выльăх-чĕрлĕхрен 201 пин тенкĕ тупăш курнă. Çакă вăл колхозăн пĕтĕм тупăшĕнчен 85 процентĕ пулать. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне çулсеренех ирттерсе тултарать.

Парторганизаци выльăх-чĕрлĕх пăхакан кадрсем вĕрентсе хатĕрлессине тĕп вырăна хучĕ; фермăсенче ĕçлеме коммунистсемпе комсомолецсене уйăрчĕ. Халĕхи вăхăтра пирĕн фермăсенче 4 коммунист тата 3 комсомолец ĕçлеççĕ. Кунта партгруппа йĕркеленĕ. Ăна опытлă коммунист В. Царева юлташ ертсе пырать.

Партгруппа фермăсенче ĕçлекенсен социализмла ăмăртăвне организацилет, хăйĕн пухăвĕсенче час-часах производство [illegible] коммунистсене уйрăм [illegible] парать, агитаци-массăлла ĕçе анлăн сарса пырать, боевой листоксем кăларассине йĕркелет.

Коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, КПСС членĕ Ф. Николаева юлташ кăçал хăй пăхакан кашни сысна аминчен 24-шар çура илчĕ. Ф. Николаева юлташ хăйĕн паха опычĕпе ытти свинаркăсене те паллаштарать. Унпа пĕрле ĕçлекен П. Галкина свинарка кашни амаран 21-шер çура, В. Царева свинарка 20-шер çура илчĕç.

Ф. Николаева юлташ обществăлла ĕçе те активлăн хутшăнать. Вăл парторганизаци панă поручениесене вăхăтра тата чыслăн пурнăçласа пырать. Ăна, фермăри работниксем хăйсен чи юратнă агитаторĕ вырăнне хурса шутлаççĕ.

Эпир выльăх-чĕрлĕх пăхакансен вĕренĕвне йĕркелерĕмĕр, вĕсем ялхуçалăх наукин çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракансен опычĕпе паллашаççĕ. Парти организацийĕ сĕннипе колхоз правленийĕ ферма работникĕсене вĕрентме зоотехника кружокĕ йĕркелерĕ. Вĕренĕве мĕнпур работниксене явăçтарнă. Кружок занятийĕсем вăхăтра тата çирĕп план тăрăх пулса пыраççĕ. Кашни работник вĕренÿре илнĕ пĕлĕве практикăлла ĕçпе çыхăнтарса пыма тăрăшать.

Выльăхсене пăхас ĕçре пирĕн çитменлĕхсем те чылай пулнă. [illegible] пулнă. Парти организацийĕ выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене пĕтерме сахал мар вăй хучĕ.

Чи малтанах эпир фермăсенче ĕçлекенсене улăштарассине пăрахăçа кăларма тăрăшрăмăр, яланлăха ĕçлеме çирĕплетнĕ кадрсене вĕрентессине йĕркелерĕмĕр. Кунпа пĕрлех малта пыракансен опычĕпе паллаштарассине тĕп вырăна хутăмăр. Çакă тупăш пысăк ÿсĕм тума май пачĕ, ĕç хастарлăхне ÿстерчĕ. Акă, доярка М. Спиридонова юлташ иртнĕ çулхи 11 уйăх хушшинче хăй пăхакан кашни ĕнерен 1.040-шер литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçалхи 11 уйăх хушшинче вăл 1.300-шер литр суса илчĕ. Сурăх пăхакансем те, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, пысăк çитĕнÿсем турĕç. Кăçал эпир кашни 100 сурăх пуçне 129 путек илнĕ.

Малта пыракансен паха опычĕ çинчен сăмахпа кăна каласа пани çителĕксĕр. Çын паха опыта хăй куçĕпе курсан тата лайăхрах ăнланса илет. Парти организацийĕ правленине фермăри работниксене малта пыракан артельсене экскурсие яма сĕнчĕ. Çакăн хыççăн пирĕн фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсенче пулса курчĕç.

Выльăхсенчен тупăш илесси ăратлăха лайăхлатса пынинчен нумай килет. Парти организацийĕ сĕннипе правлени ăратлă выльăхсем нумай туянчĕ. Халĕ пирĕн фермăсенче лайăх ăратлă сурăхсем, сыснасем тата ĕнесем нумайланса пыраççĕ.

Парторганизаци агитаторсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене ирттерессине çирĕп план тăрăх туса пырать. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх 3 хутчен агитаторсен канашлăвĕсем ирттерчĕ. Агитаторсем ферма работникĕсене партипе правительство выльăх-чĕрлĕх работникĕсем умне лартнă задачăсем çинчен ăнлантарса парассине анлăн туса пыраççĕ.

Парторганизацине колхоз правленийĕ колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес кăмăлне куллен ÿстерсе пыма тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене çирĕп пурнăçласа пыни пысăк вырăн йышăнать. Эпир кăçал пур фермăсенчи работниксене те ĕçшĕн хушса тÿленĕ. Сăмахран, виçĕ доярка хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесенчен илнĕ пăрусене 20 куна çитиччен лайăх пăхнăшăн 2-шер сысна çури панă. Çавăн пекех сысна пăхакан Ф. Николаева юлташ 13 сысна çури, П. Галкина тата В. Царева юлташсем 8-шар çура илчĕç.

Парти организацийĕпе правлени кашни уйăхрах фермăра работниксен производствăлла канашлăвĕпе пĕрлехи пухăвĕсене ирттереççĕ. Унта умра тăракан задачăсем çинчен сÿтсе явăтпăр. Ферма работникĕсем канашлăва активлăн хутшăнаççĕ, пирĕн ĕçри çитменлĕхсене кăтартса параççĕ. Эпир вĕсен кăтартăвĕсемпе сĕнÿĕсене мĕн май килнĕ таран пурнăçлама тăрăшатпăр.

Хамăр районти «Гвардеец» колхозăн опычĕпе усă курса, выльăх апачĕ хатĕрлемелле [illegible] тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Коммунистсем çак ĕçре социализмла ăмăртăвăн чăн-чăн организаторĕсем пулса тăчĕç.

Выльăх апачĕ хатĕрлеме 40 çынран бригада йĕркелерĕмĕр. Ăна ертсе пыма ку тĕлĕшпе пысăк опыт туяннă колхозника А. Дюкин коммуниста çирĕплетрĕмĕр. Бригадăна 8 лаша, 2 вăкăр тата кирлĕ чухлĕ ялхуçалăх машинисем çирĕплетсе патăмăр. Выльăх апачĕ туса илме уйрăм пусă çаврăнăшĕ йĕркелесе ятăмăр. Халĕ эпир выльăх кĕтĕвĕсене апатлăх акнă курăк çинче çÿрететпĕр, тымарçимĕçсемпе куракăсем çителĕклĕ акса илетпĕр.

Çапла туни пире обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл касарма кирлĕ чухлĕ лайăх апат хатĕрлесе хăварма май пачĕ. Выльăхсем валли 235 тонна силос хывнă, 6.155 центнер сĕтеклĕ апат, 2.083 центнер концентрат, çамрăк выльăхсем валли 312 центнер утă тата ытти апатсем нумай хатĕрленĕ. Вăтамран илсен кашни ĕне валли 5 тонна сĕтеклĕ апат тата 6-шар центнер концентрат пур.

Ферма çурчĕсене хĕле кĕриччен лайăх юсаса çитертĕмĕр. Выльăхсем ăшă витесенче хĕл касараççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ ÿссе пыни, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана ăнăçлă тултарса пыма тата колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх сĕт-çу, çăм, какай парассине тăтăшах ÿстерме май парать. Кăçал, сăмахран, кашни ĕçкунĕ çине 200-шер грамм сĕт, 75 грамм какай панă. Кунсăр пуçне, выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăшран 25 процентне çак кварталтах ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама палăртса хунă. Тата çакна та каламалла: кăçал государствăна [illegible] «ГАЗ-51» маркăллă грузовик турттармалли автомашина туянтăмăр.

Анчах та обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн çитĕнÿсемпе пĕрлех чылай çитменлĕхсем пур. Уйрăмах фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилесси пурнăçланса пымасть. Парторганизаци фермăсенчи мĕнпур ĕçсене çывăх вăхăтра механизацилесе çитерме задача лартрĕ.

Халĕ, коммунистсем пуçарнипе, выльăхсем валли типовăй витесем тума хатĕрленетпĕр. Çавна май вăрман хатĕрлес ĕç хĕрÿллĕн пырать. Çитес çывăх вăхăтрах 20 лаша, 20 пуç сысна, 50 пуç пăру вырнаçмалăх витесем тата 150-шар тонна силос хывмалăх икĕ башня тума палăртнă.

Парти организацийĕпе колхоз правленийĕ артель членĕсене хăйсен килĕнче выльăх ĕрчетме мĕнпур условисем туса парассишĕн кĕрешеççĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх утă-улăм тата тымарçимĕçсем нумай уйăрса паратпăр. Халĕ кашни колхозник çемйи сысна усрать, 50 хуçалăх пăру туянчĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени обществăлла хуçалăха малалла тĕреклетме пысăк майсем уçса пачĕ. Историлле решенисемпе хавхаланнă колхоз ĕçчĕнĕсем, ытти отраслĕсенчи пекех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума пысăк обязательствăсем илчĕç.

Парторганизаципе колхоз правленийĕ партипе правительство выльăх-чĕрлĕх работникĕсем умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешĕве кунран-кун аталантараççĕ, мĕнпур вăйсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума мобилизацилеççĕ.

Н. СОЛДАТОВ.
Чкаловски районĕнчи «Восход» колхозри парторганизаци секретарĕ.

КИНО

„ТУСЕМ ХУШШИНЧИ ЗАСТАВА"

Республикăри кинотеатрсенче «Тусем хушшинчи застава» ятлă илемлĕ фильм кăтартаççĕ.

Фильмра совет пограничникĕсем Тăван çĕршывăн чиккисене сыхланине кăтартнă.

...Ĕмĕрхи юрпа витĕннĕ сăртсем. Малтанах кунта нимĕнле пурнăç та çук, çын ури те пырса çитмен темелле. Акă ăмăрткайăк, хăй валли апат шырама тухнăскер, сывлăшра вĕçет. Çав шухăшпах хăмăш хушшинче тигр шăвăнса çÿрет. Çаксене курсан, чикĕ хĕрринче пурнăç питĕ хăпкă пек туйăнать. Анчах та апла мар иккен.

Застава хăйĕн пурнăçĕпе пурăнать. Пограничниксене эпир вĕренни çĕрте, пушă вăхăта ирттернĕ чухне, Тăван çĕршывăн чиккине сыхланă çĕрте куратпăр.

Заставăна Сергей Лунин пырса çитет. Āна начальник заместителĕ пулма янă. Застава начальникĕ Прохоров, чирлĕ пулин те, Лунина чикĕри лару-тăрупа паллаштарать. Чирлĕ Прохорова госпитале илсе каяççĕ. Ун вырăнне Лунин юлать.

Чикĕ леш енче—Исмаил-бек ертсе пыракан банда. Çак банда патне пĕр ют çĕршывран темĕнле археологи экспедицийĕ çитсе чарăнать.

Часах хир сыснисем шыв ĕçме çÿрекен çул улшăнни паллă пулать. Паллах, çав сыснасене çынсем çеç хăратма пултарнă. Лунин, лару-тăрăва сиссе, çĕрлехи наряда Кулешов сержантпа Марченкона лашасемпе кăларса ярать, хурала вăйлатать. Çав кăçал ăнсăртран, яланхи пекех, çĕр чĕтренсе илет. Кулешовпа Марченко ту хăвăлне пытанаççĕ, анчах сăртран йăтăнса анакан чулсем ту хăвăлне питĕрсе лартаççĕ. Иккĕ лекнĕ пограничниксем телейне пĕр хушăк тупăнать. Вĕсем çав хушăкран тавралăха сăнама тытăнаççĕ.

Паттăр пограничниксем, хăйсен инкекĕ çинчен заставăна пĕлтерес шутпа, Кулешов сержантăн аслă лашине—Орлике—заставăна яраççĕ. Çĕр чĕтренипе çĕмĕрĕлнĕ кĕпер урлă каçайманнипе тата тигртан хăранипе, Орлик юханшыв урлă каçса чикĕ леш енне лекет. Çырупа кăларса янă кăвакарчăна та тискер кайăк тытса çиет.

Лунин ытти пограничниксемпе пĕрле сухалнă наряда шырама тухса каять. Унăн отрячĕ пĕр шанчăксăр çынна тытса чарать. Çын хăйне ватă старике перет, унтан çĕтсе кайнă ученăй-археолог пек кăтартма тăрăшать. Шпиона тĕпчени май чикĕ леш енчи вăрттăн ĕçсем паллă пуçлаççĕ.

Тăшман разведки Марроупа Стенли шпионсене совет чикки урлă каçарма хатĕрлет. Çак ĕçе ăнăçлă тăвас тесе тăшман разведчикĕсем Исмаил-бек бандипе килĕшÿ тăваççĕ. Çĕрле Марроупа Исмаил-бек чикĕ урлă каçмалли вырăна тухса каяççĕ. Бандитсен пуçлăхĕ совет заставине тапăнасшăн мар. Вăл ĕç тухасса шанмасть. Марроу, бандитсен пуçлăхне çавăншăн персе пăрахать. Кулешов лаши Орлик, Исмаил-бек аллинче пулнăскер, заставăна каялла таврăнать.

Исмаил-бека совет салтакĕсем вĕлернĕ тесе ĕнентерсе, тăшман разведчикĕсем бандитсемпе пĕрле пирĕн чикĕ урлă каçма калаçса татăлаççĕ.

Тул çутăлас чухне банда юханшыв урлă каçма тытăнать. Марченко нарячĕ тăшмансене вутпа кĕтсе илет. Вăйлă çапăçу пуçланать.

Заставăри пограничниксем пурте çапăçăва хутшăнаççĕ. Лунин рядовой Воробьева пулăшу ыйтма колхоз председателĕ патне ярать, анчах ăна пĕр аманнă бандит ăнсăртран персе вĕлерет. Çак приказа пурнăçлама Кулешов сержант кăмăл тăвать. Акă вăл Орлик çине утланса вĕçтерсе пырать. Орлика курсан, бандитсем лашана чĕррĕн тытса илес тесе Кулешова хăвалама тытăнаççĕ. Маттур Кулешов вĕсене хăй хыççăн илĕртсе каять, комендатурăран заставăна пулăшма янă Прохоров капитан ертсе пыракан утлă отряд патне тыткăна илсе пырать. Бандăна тыткăна илнĕ çĕре вырăнти колхозниксем те хутшăнаççĕ.

Чикĕри çапăçупа усă курса, Марроупа Стенли юханшыв урлă каçаççĕ. Марроу заставăна лекет, Стенли пограничниксен пульлинчен вилет.

Юлашкинчен эпир Прохоров капитан пограничниксене боевой приказ панине куратпăр.

Пограничниксен пурнăçĕпе чаплă ĕçĕсене чăн та юратсах пăхатăп, пирĕн пограничниксем халăхпа таччăн çыхăнса тăнине туятăн. Паттăр хуралçăсен ĕçĕ куракансене сыхă пулма, сыхлăха ÿстерме, коммунизм тунă çĕрте тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

В. ЕФИМОВ.

Пуян репертуаршăн, паха спектакльшĕн!

Нумаях пулмасть Чăваш государство академи театрĕпе Республикăри вырăс драма театрĕн спектаклĕсене куракансен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта пĕр ыйту тăчĕ, вăл—юлашки вăхăтра лартнă спектакльсен пахалăхĕ çинчен сÿтсе явасси.

Аслă режиссерсем Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Б. Н. Ивановпа Чăваш АССР халăх артисчĕ Е. А. Токмаков юлташсем куракансене театрсен юлашки тапхăрти ĕçĕсем тата вĕсен умĕнче çитес çывăх вăхăтра тăракан задачăсем çинчен кĕскĕн каласа пачĕç.

Конференцире пулнисем театрсен ĕçĕнчи çитĕнÿсене палăртрĕç. Çитменлĕхсем çинче ытларах чарăнса тăчĕç. Уйрăмах спектакльсен пахалăхĕ, артистсен ăсталăхĕ тата репертуар пирки калаçу вăйлă пулчĕ.

Пир-авăр комбиначĕн строительствинчи рабочи Желобанов юлташ театрсен коллективĕсем хăйсен творчествăлла ĕçĕнче пурнăçа сăнаса вĕренменнине палăртать.

— «Беспокойная должность» спектакльре,—тет вăл,— завод директорне кучуххели пурнăçран ытла та аякра тăнă пек, вăл нимĕн те ăнланма пултараймаст çын пек сăнласа кăтартнă. Ана директор мар, карикатура теме пулать. Ку роле выляканн артистăн пĕр-ик заводра пулса, директорсен ĕçĕпе йăлисене сăнаса пăхмалла пулнă. «Не называя фамилий» спектакль пире пурне те кăмăла кайрĕ. Унта совет рабочийĕсен пурнăçĕне йăлипе те, уйрăмах рабочи çемйине те лайăх кăтартса панă. Пьесăна лартма хатĕрленĕ тапхăрта пирĕн артистсен мĕншĕн-ха вырăна тухса рабочисен пурнăçĕпе çывăхарах паллашас мар! Капла тунă пулсан, спектакль тата вăйлăрах, ĕнентерÿллĕрех пулса тухма пултаратчĕ.

— Театр хăшпĕр чухне лайăх пьесăсах пĕсни те пулкалать — тет Н. Стуриков юлташ.— Асăннă спектакльре хаçатăн пĕр номерĕнех темиçе ярне хушши вулани курăнать. Спектакльри чылай вырăнсем пирĕн совет хаçачĕн хальхи редакцийĕнчи пек пуласа тухайман. Ку ĕнтĕ артистсем хаçатсен редакцийĕсен пурнăçне ĕçне пĕлменнине кăтартать. Спектакльри çитменлĕхсемшĕн ку пьесăн авторĕ мар, театр айăплă.

— Вырăс драма театрĕн коллективĕ пьесăсен шухăшне пур чухне те тарăнăн тавçăрса илме тăрăшмасть, ытларах формине çинчен, тулашĕ çинчен кăтартма тăрăшать,— тет музыка училищин преподавателĕ Равинова юлташ.— «Не называя фамилий» спектаклĕн кулăшла енне кăна вăйлатас çул çине тăнипе режиссер тĕрĕсех тумаи. вара, чăннипе илсен, сатира та мар, шарж пулса тухнă. Çакă ĕнтĕ пьесăра çынсен шалти шухăш-кăмăлне уçса кăтартнине мар, вĕсен тулашне кăтартнипех çырлахма тăрăшнине пĕлтерет. Театр коллективĕ вырăссен паллă артисчĕсен традицине йышăнса, ăна çирĕп тытса пыни кирлĕ.

— Вырăс драма театрĕ «Не называя фамилий», «Беспокойная должность» т. ыт. спектакльсенче юрăхсăр çынсен сăнĕсене вăйлăрах кăтартать, çав хушăрах лайăх çынсен, сăнĕсене тĕссĕр, ывăнсăр кăларать. Ку — пьеса авторĕсен айăпĕ. Анчах вăл театрăн çеç мар, пьесăсен авторĕсенчен те килет,— тет пединститут студентки Ашмарина юлташ.

Куракансем театрсен репертуарĕ пирки чылай каларĕç.

— Совет çĕршывĕнчи социализмла нацисен аслă çемйинче пурăнакан чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсенчен те паллă генералсем, Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмла Ĕç Геройĕсем, ученăйсем, инженерсем т. ыт. те пур, аслă тата вăтам шкулсенче вĕренекен чăваш çамрăкĕсем пиншерĕн шутланаççĕ, пĕр сăмахпа каласан, пĕтĕм халăх вĕрĕнет. Анчах Чăваш академи театрĕн репертуарĕ питех те чухăн.— тет пединститут студенчĕ Остеров юлташ.— Студентсен пурнăçне кăтартакан пьеса та çук-ха.

— КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хыççăн чăваш драматургĕсен ĕçĕнче нимĕнле улшăну та курăнмасть, колхозла ялăн паянхи пурнăçĕ çинчен, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе пăхакансем çинчен çырнă пьесăсем пачах çук,— тет ялхуçалăх институтĕнчи студент Аферкин юлташ.

Филологи наукисен кандидачĕ Бройтман юлташ театрсен репертуарне вырăссен классикла драматургин тата тĕнчери прогрессивлă драматургсен пьесисене кĕртме сĕнет.

Çамрăк автор В. Урдаш нимĕн тĕлсĕр хăласланса кăшкăрнине, çынсене хирĕç репликăсем парса ларнине куракансем хытă сивлерĕç. Театр унăн çĕнĕ пьесине, вăл ÿпкелешсе кăтартнă тăрăх, укçа тÿлесшĕн мар пирки йышăнман имĕш. Куракансем Урдаша çакна асра тытма хушрĕç: сăмах, чăннипе илсен, вырăнти авторсем çырнă паха пьесăсем сахал пулни çинчен пырать.

• • •

Куракансен конференцине ирттерни—питĕ паха пуçару. Ку театрсен ĕçне лайăхлатма пулăшмалла. Анчах Пĕтĕм Российăри театрсен обществин Чăваш республикинчи уйрăмĕпе театр дирекцийĕ конференци ирттерессине тивĕçлĕ хак паман Куракансем чылайăшĕ йыхрав билечĕсене конференци пулнă кун тин алла илнĕ. Çавăнпа вĕсен хăйсен шухăшне пĕтĕмĕшле хатĕрленмешкĕн, паллах, вăхăт та пулайман. Конференцире хулари хăшпĕр пысăк предприятисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем, интеллигенци (врачсем, учительсем), колхозниксем пулмарĕç. Чăваш драматургĕсем конференци ĕçне хутшăнмарĕç. Вĕсем хăйсен пьесисем пирки мĕн каласнине итлеме, куракансемпе куçкĕретĕн тĕл пулса калаçма кăмăл тумарĕç пулас.

Куракансен иртнĕ конференцийĕнчен вара театрсем мĕнле ĕçсен тухи, вĕсен çитменлĕхĕсемпе çитĕнÿсем, панă сĕнÿсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен театрсем енчен тĕпăĕн çутатса пани пулмарĕ.

• • •

Куракансем çакна шанаççĕ: критикăла кăтартусемпе сĕнÿсене шута илсе, республикăри Чăваш академи театрĕпе вырăс драма театрĕ хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатĕç, КПСС XIX съездĕ совет искусстви работникĕсем умне лартнă ыйтăвсене задачăсене ăнăçлă тата парĕç.

Ст. ИВАНОВ.

КАПКĂН КĔТЕССИ

Фотоÿкерчĕк айĕпле

Шупашкарти Карл Маркс урамĕнчи 15-мĕш çуртри чылай хваттерсенче сивĕ. Унта канализаци те час-часах йĕркерен тухкалать. Хваттерсенче нÿрĕ пирки чул стенасем йăшаççĕ. Водопроводăн тулашри трубисем çара. Çапла вара трубасем тăрăх пĕлĕмсене каймалли ăшă тухтах юлать.

Хĕл ларас умĕн хулари коммунальнăй хуçалăх панĕ кирлĕ мар çĕртенех çак çурт умне вăрăм шăтăк чавтарса хунă. Халĕ вара çав çуртра пурăнакансен шăтăк урлă шикленсе каçса çÿреме тивет. Автомашинăсем те кил хушшинчи гаражран çав шăтăк çумĕпе иртсе çÿреççĕ. Кунта уйрăмах ача-пăчапа ватă çынсене çÿреме хăрушă. Çуркунне çуртран тухса çÿреме те май пулас çук.

Çав çуртра пурăнакансем горжилуправленине (начальникĕ Миронов юлташ) тăтăшах пырса йăлăнаççĕ, йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме ыйтаççĕ. Анчах та тивĕçлĕ юлташсем хула çыннисен сăмахне хăлхана чикмеççĕ. Капкăн ÿкерсе илнĕ хыççăн çеç вĕсем çав шăтăка питерме кирли çинчен калаçу хускатрĕç, ытти пирки сăмах çук-ха. Çакăн пек кирлĕ мар шăтăк-сурăв чавкаласа, паллах, çав тери тăкак нумай тухать (ун пек усăсăр ĕçе халапра «çупăте ĕçĕ» теççĕ).

Ÿкерчĕк çинче: сурт алăкĕ умне алтса хунă шăтăк. Унăн тарăнăшĕ 2 метра яхăн, сарлакăшĕ метр ытларах. Хыçалти—гараж.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ТАКМАКСЕМ

Ах, анчах, тупата,
Пĕри тĕлĕнтерчĕ:
Клубра доклад итленĕ чух
Питне тăм илтерчĕ.
Симĕс тутăр та пулать,
Хура тутăр та пулать.
Бригадирпа калаçсан
Ĕçкунĕ нумай пулать.
А-я-яй, пĕçерет,
Критика-çке витерет.
Пирĕн Капкăн хăшпĕрне
Йĕплĕ сăмах çитерет.

Анна СОСНОВА.

Капкăн кĕтессин почти

Капкăн страницинче пĕлтерÿ пичетлесе кăларнăччĕ, ăна сăвăласах çырнăччĕ, анчах та çав пĕлтерĕве хăшпĕр корреспондентсем вуласа тухмăн пулмалла.

Сĕнĕрен аса илтеретпĕр: Капкăн страници валли ярса панă кашни материалтах конкретлă факт, çынсен ячĕпе хушамачĕ тата ĕç мĕнле пулса иртни çинчен тĕплĕн çырни кирлĕ.

Халĕ килекен чылай çырусенче маларах калани çукрах. Çавăнпа та Бучков (Елчĕк районĕ), Одинцов (Октябрьски районĕ), Федоров (Шупашкар районĕ), Олангин (Ишлей районĕ), Абрамов (Вăрмар районĕ) тата ытти хăшпĕр юлташсен заметкисем Капкăн страницине пичетлеме юрăхсăр пулчĕç.

Ултавçă Мĕкĕте

Шупашкар. 1953 çул. Январь уйăхĕн 3-мĕш кунĕ.

Пĕр автомашина Ленин урамĕ тăрăх çĕмĕрттерсе анчĕ те, Ленинградски урамалла пăрăнсанах сыхăну сурчĕн хапхи умне чарăнчĕ.

— Усăр часрах! Мĕн туса ларатăр!?— Куштанланасах кăшкăрчĕ хура шинель тăхăннă, аллине пысăк сумка тытнă пĕр пĕчĕкрех пÿллĕ арçын.

Пĕр хĕрарăм хапхана ик еннелле яр! уçса ячĕ те:—Çав терех шăнтăр-и вара, Уриков юлташ?—терĕ.

— Шăннă çав. Паян хĕрĕх градуслине пĕрер стакан хаплаттарсан япăхах пулмĕччĕ те...

— Сана валли,—илтĕнчĕ хĕрарăм сасси,—хĕрĕх градуслисĕрех ăшăнмалли пурха паян.

— Мĕн апла, мĕн?—Пĕлесшĕн пулчĕ Уриков.—Мĕн пулнă вара?

— Хăварпа пĕрле ĕçлекенсем калĕçха... Ытла ан васка. Васкакан арăмĕнчен савăнайман, тет.

Уриков сыхăну çурчĕн виççĕмĕш хутнелле васкаса хăпарчĕ Вăрăм коридор тăрăх таплаттарса утнă çĕртенех сыхăмалла варт! пăрăнчĕ те, пĕр таса та çутă пÿлĕме кĕрсе тăчĕ.

— О-о! Мĕкĕте çитрĕ,—терĕç пÿлĕмре ларакансем.

— Сан паян мăнкун,— терĕ такăшĕ.

— Э-э, уншăн кашни кунах мăнкун вĕт,—терĕ тепри.—Мĕкĕтен ĕç ăнать ĕнтĕ. Паян унăн «чапĕ» пĕтĕм республика тăрăх сарăлчĕ Ватти те, çамрăкки те пĕлчĕç ун çинчен.

— Мĕнле чап? Мĕн ăнланмалла мар калаçатăр çак эсир?—мăкăртатрĕ Уриков.

— Ме. вула.—терĕ виççĕмĕшĕ, Мĕкĕтене хаçат тыттарса.

Мĕкĕте чĕтрекен аллисемпе хаçата тытрĕ те. пăшăлтатса вуларĕ:

— «Похождение Никиты Урикова... Фельетон » Унăн çамки çине пăрса пек шултра тар тапса тухрĕ Пĕр самант вăл нимĕн чĕнмесĕр тăчĕ Унтан:—Кăна никам та мар, хамăр начальник пĕлтернĕ,—терĕ.—Унсăр пуçне эпĕ вуçĕ хут авланни çинчен редакци пĕлме пултарас та çук.

— Кирек те кам пĕлтернĕ пултăр. —терĕç пÿлĕмре ларакансем,—фельетона питĕ тĕрĕс çырнă. Тахçанах кирлĕ пулнă ку япала Фельетон сахалтарах, çире, Артюшкинăпа икĕрĕ. тата хытăрах пĕçертмелле те... Пурăнатăр атăшса: эсĕ. кил çухатнă пек. пĕрмай ют хваттерсем тăрăх чупатăн. Ара, ывăлу кĕç авланмалла пулать те... Памăса пĕлмесĕр тек авланса çÿретĕн. Малтанхи арăмупа виçĕ ача, иккĕмĕшĕпе икĕ ача ĕнтĕ сан. Артюшкина та çуратса парĕ-ха...

Çак йĕплĕ сăмахсене илтсен, Уриков кĕсĕттен çĕртенех пуçне хыçса илчĕ. Вăл ним калама аптрарĕ пулас. Вăрăммăн хаш сывларĕ те, сыхăну çуртĕнчен тухса, Артюшкина Валя пурăнакан хваттерелле сĕнкĕлтетрĕ.

...Нумай, питех те нумай каласрĕç Мĕкĕтепе Валя юнашар ларса.

— Сыхчăри!—терĕ Уриков Вальăна çурăмĕнчен аллипе ачашласа,—пирĕн юратăва никам та сÿнтерейме... Эх, чунăм! чунăм! Ытла ан пăшăрхан. Хут чăтать теççĕ: паян шавласçĕ, ыран шăпланасçĕ...

Пĕррехинче, Швецов начальник пулса ĕçлекен сыхăну уйрăмĕнчи связистсем пĕр çĕре пухăнчĕç. «Похождение Никиты Урикова» фельетона сÿтсе яврĕç. Тухса калакансем нумай пулчĕç. Нумай хутчен авланнăшăн хăйĕн ачисене пăрахнăшăн питĕ хытă ятларĕç Урикова.

Çавăн чухне Мĕкĕте çирĕм хут хĕрелчĕ, çирĕм хут шуралчĕ. Чăннипех çав тери намăсланчĕ вăл. Юлашкинчен ăна хăйне сăмах пачĕç.

— Эпĕ,—терĕ Уриков,—чăнахах та йăнăш çул çине тăнă. Малашне кунашкал атăшса пурăнмастăп, хамăн ачасем патне каятăп, вĕсемпе пĕрле пурăнатăп.

Мĕкĕте сăмахĕпе савăнчĕç ун чухне связистсем:—Пит аван, арăмĕ те тевех хуйхăрмĕ, ачисем те хĕпĕртĕç...

Артюшкина Валя та ресторанта ĕçлекенсем умĕнче çирĕп сăмах пачĕ:

— Урăх кунашкал атăшмăп. Ача-пăчалла сынна сыпçăнмăп...

Сакнашкал шăв-шав хыççăн Уриков хăйĕн çемйипе пĕрле пурăнма пуçларĕ. Анчах... унăн пуçĕнчен пурпĕрех Валя тухмастчĕ Ыйăх та килместчĕ унăн. Хутран-ситрен вăл майне тăсса, платти хĕрринчен арăмĕ çине, тутлă ыйхăпа сывăракан виçĕ ачи çине пăхса илетчĕ.

Пĕр уйăх иртсен, кас-кас татах киле таврăнми пулчĕ Мĕкĕте. Вăл татах Валя патне çÿреме пуçларĕ.

— Валяна юратмасăр,—тет Мĕкĕте хăй ăшĕнче,—арех ĕçтерет, апатне лайăх çитерет ытти енчен илес пулсав та... Мĕн калăн? Мĕн тума май малтанхи арăмпа пурăнас! Унта çемье... Расхол пысăк...

— Çук, теççĕ связистсем,—Мĕкĕте йăнăш калаçать Вăл, авланма ăсталанса çитнĕскер, пире улталарĕ. Ултавçă Мĕкĕте! Çитменнине пĕтĕм коллектив умĕнче малтанхи арăмпа. ачасемпе пĕрле пурăнатăп. тесе сăмах пачĕ.

Урикова авланас тĕлĕшпе «рекорд» çапма пăрахтарас тесен, çĕнĕ меслет тупас пулать. Меслечĕ пур. Вăл—Шупашкар хули прокуратуринче.

А. ИВАНОВ.

Юлташла тăрăхлани



Семен Васильевич Элкер мухтанă хыççăн çамрăк поэт Иван Пинкев тата çÿлерех ÿссе пырать...

П. СИЗОВ ÿкерчĕкĕ.

Пĕр пайне çырнă та, „маннă..."

Л. Агаков писателе „халаласа"

Пĕр пайлă драма

Выляканссем: Писатель, машинистка, представитель.

Сутă пÿлĕм. Урайĕнче хутсем сапаланса выртаççĕ Пичетлекен машинка умĕнче писатель тăрать.

Писатель. Машинистка, манăн çĕнĕ произведени çырмалла! Часрах!.. Кайран манса кайма пултаратăп

Машинистка. Юрать. халех кĕретĕп.

Писатель (пуçне хыçкаласа пÿлĕм тăрăх утка лать). Ах! Ах! Манса та каятăп ĕнтĕ. Произведенире миçе геройччĕ-ха? Хм... хм... Машинисткăн пĕлме кирлĕ-ха ăна.

Машинистка (чупса кĕрет). Халех тетĕн-и! Мĕн тумаллаччĕ ара!

Писатель. Произведени çапмалла. Вăрçă вăхăтĕнче çырнă повеçĕн ячĕ мĕнлеччĕ вара?

Машинистка. Пĕлейместĕп. Санăн хăвăнах пĕлме кирлĕ ĕнтĕ ăна.

Писатель. Юрать! Эпĕ ăна архивра тупăп. «Ялав» журналта пулма кирлĕ-ха вăл (тухса каять).

Машинистка. Çавна та пĕлеймерĕ. Повеçĕ «Атăл хĕрĕ» ятлă вăт! (Сасартăк алăка шакаççĕ). Кам унта? Кĕрĕр.

Представитель (кĕрсе). Çав писатель юлташа курса калаçма пулмĕ-ши?

Машинистка. Пулать пулĕ. Халĕ анчах кайсаччĕ.

Представитель. Халех килме пултарать-ши?

Машинистка. Халех мар пулĕ-ха. Ĕçпе кайнă вăл. (Представитель тухать).

Писатель (урăх алăкран кĕрсе). Кам пулчĕ вара ку?

Машинистка. Ялтан килнĕ пулмалла.

Писатель. Ялтан? Çав повеçа вуласшăн сÿрет ĕнтĕ вăл. Халĕ те «васкаса» çыратăп. Иккĕшне те çырса пĕтерейĕмерĕм, «Атăл хĕрĕ» пулнă вăл.

Машинистка. Тупрăв апики?

Писатель. Анчах, анчах...

Машинистка. Мĕн анчах...?

Писатель. Тĕп геройне пĕлейместĕп. Ячĕне те кĕнекесен спискĕ çинче кăна тупрăм. Çав представителех чĕнмеллеччĕ, вăл вуланă пулĕ.

Машинистка. Халь анчах тухса кайрĕ вăл.

Писатель. Ну юрĕ, Герой ячĕсене манатăм çав. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ, Вунă çула яхăн...

Машинистка. Халĕх кĕтет-ши вара ăна? Манна та пулĕ.

Писатель. Давай «маннă» тесе йышăнатпăр. Ăна пичетлекесен те юрать. Повесть анчах вăл. Роман çырма тапрататтăр!

Чăрша.

Н. ПЕРИНОВ.

„Эсир мĕнле министрсем вара?"

Сĕрпÿри апат-çимĕç сутакан магазин. Магазинта черет пысăк,—пурте халь çеç кÿрсе килнĕ лапшапа макарон илесшĕн.

Продавец черет çине çаврăнса та пăхмасть—ăçта унта черет çине çаврăнса пăхма! Малтан хăйĕн паллакансене сутмалла вĕт. Акă пĕри черетсĕр илесшĕн, унтан тăйсен кÿрши пырса тăрать—ăна та кĕттермелли çук: ун хыççăнах хăй паллакан çыннăн пуçĕ вĕлтлетсе илет — черетсĕр сутмасан, çиленме пултарать вăл.

Черетре тăракансем тинех вăл мĕнле продавец пулнине туйса илеççĕ Вĕсем ÿпкелешме, черетсĕр ан парăр, теме пуçлаççĕ. Вĕсем асăрхаттарнине продавец хăлхине те чикменнине курсан, жалоба кĕнеки пама ыйтаççĕ. Продавец малтанхи пекех черет çине çаврăнса та пăхмасть. унтан çилĕллĕн куç айĕпе пăхса илет те:

— Эсир мĕнле министрсем пултăр вара? Кашни çыннах жалоба кĕнекине пама пуçласан...—тесе хурать.

Г. КРАСНОВ.

ÇĔНĔ ХЫПАР

— Эсир çак илемлĕ папкăрта районтан паян çĕçĕ заданисем илсе килетĕр пулмалла?—Ăнăçлăх сунатăп.

— Çук, заданисем мар, ĕçе вăхăтра тумасшăн выговор парса ячĕç.

ПĔЛТЕРÿ

— Унта мĕнле пĕлтерÿ çакса хунă?

— Çĕнĕ кинофильм, «Радуга».

— Чăнах та çĕнĕ. Эпĕ хамăр ялта кино курни çинчен те маннăччĕ ĕнтĕ.

В. УКА.

Курсан та, пĕлсен те—ан шарла...

Яланхи пекех, паян та Миронов директорăн хваттерĕнче шавлă. Сĕтел тулли тĕрлĕ апат-çимĕç, черккесенче эрех чÿхенет... Хăнара—директорăн çывăх çыннисем, вĕсем хăйсен пуçлăхне ыра-сывлăх сунса ĕçсе çиеççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Кунта Ф. Алексеев бухгалтер, Н. Андреев кладовщик, Г. Павлова повар, А. Евдокимова воспитательница.

— Григорий Степановичпа пурăнма пулĕ. Вăл чăн-чăн руководитель, лайăх педагог. Ĕçлеме пирĕн унтан вĕренмелле. Ĕçер-ха, хаклă хăнасем, Григорий Степановичăн сывлăхĕшĕн, унăн малашнехи ĕçĕнчи , çитĕнĕвĕсемшĕн!.. — йăпăлтатса калаçать Евдокимова, директор аллинчен черкке тытса.

Çакăн пек шавлă ĕçкĕсем Пĕнерçри ача çуртĕн директорĕ патĕнче тăтăшах пулаççĕ. Ĕçкĕ хыççăн вара директор илмех «чирлет», ĕçе тухаймасть.

Директора кăштах та пулин чарас тесе, хăшпĕр работниксем педагогика совечĕн ларăвĕсенче, профсоюз членĕсен пухăвĕсенче сăмах хускаткаланă, калаçкаланă та. Анчах çавăн пек работниксен часах «ĕçрен тухмалла» пулнă. Çапла, сăмахран, местком членĕ Н. Кочеткова воспитательница, тепĕр местком членĕ А. Лукоянов—çĕвĕ çĕлеме вĕрентекен инструктор, директор кăмăлне хуçакан сăмахсем каланă хыççăнах «хăйсен ирĕкĕпе» ĕçрен тухма заявленисем çырса панă. Кăçалхи сентябрь уйăхĕнче ватă столяр Д. Кузьмин ватам та ĕçрен кутукнă,

вăл директор валли диванпа этажерка, бухгалтер валли—сĕтел туса панă. Ĕçлемешĕн укçа илме директор патне пырсан:

— Эсир ырантан пирĕн патăрта ĕçлемастĕр,—тенĕ. Ун хыççăн нумай та вăхăт иртмен, столяр ĕçне вĕрентекен Н. Зубарев инструкторăн пĕр сăлтавсăрах «ĕçрен тухмалла» пулнă. Зубарев юлташ—КПСС членĕ, местком председателĕ пулса ĕçленĕ. Миронован çитменлĕхĕсем çинчен парти пухăвĕсенче те, местком ларăвĕсенче, профсоюз членĕсен пухăвĕсенче те сивĕччĕн каланă.

Теп, Миронов юлташăн нимĕнле çитменлĕх те, нимĕнле йăнăш та çук! Тен, унăн питне хĕртме те кирлĕ пулман?

Григорий Степанович Миронов 1950 çултанпа Пĕнерçре ача çуртĕнче ĕçлет: малтан вĕренÿ пайĕн заведующийĕ пулнă, кайран вара директорта ĕçлет. Директор пулнă май, вăл хăй арăмне воспитательницăна, столяр ĕçĕн инструкторне, çĕвĕ çĕлемелли цехра çĕвĕçе лартнă.

— Наталия Даниловна ăçтан-ха пур ĕçе те пĕлет, пур çĕрте те ăхĕрет?—тĕлĕнеççĕ çынсем,

Директор тĕлĕх ачасенчен ытларах кăмăл, хăйĕн çемйипе тăрăшать. Вăл ачасен валли государство панă ...

кальрен галифе çĕлетет, пальто майлаштарать, хăйĕн ачисене кĕпе-йĕм тăхăнтарать. Çĕвĕ çĕлекен мастерской Миронова унăн тăванĕсемшĕн ĕçлет. Вăл хăй валли костюм, темиçе брюки, арăмĕ валли—5 пурçăн кĕпе, ашшĕ валли—ваткăллă пиджак, аппăшĕпе шăллĕ валли—кительпе брюки çĕлетнĕ.

Директорăн выльăх-чĕрлĕхĕ ача çуртăн картишĕнче ялтă апатпа тăранса пурăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ Миронов кашни çул икшер сысна самăртса пусать.

«Пăрахăçа тухнă, киленнĕ япаласем» тесе акт çырса, чылай лайăх япалисене унта-кунта сĕтĕреççĕ. Çапла, тĕслĕхрен, директор хваттерĕнче «списать» тунă çĕнĕ «Родина» радиоприемник пахи кун та кĕрлесе ларать. Унăн заместителĕ пулса ĕçленĕ Н. Русанов килĕнче ача çуртĕн патефонĕ илемлĕ юрă-кĕвĕсене юрлать...

Директорăн ĕçлĕ-çинĕ сĕтелĕ çинче пакуник, тĕрлĕ улма-çырла татăкĕ пăрамаст. Вĕсене ачасем ларса çитĕнтернĕ сад пахчинчен илсе кĕртнĕ. Çĕрле çине пулă та çулă çатма çинче лартнă. Ăна ачасем вăйĕпе тунă пăхăран сĕрекепе сĕре-сĕре тытнă.

Ача сурчĕн автомашина пур. Миронов унпа ăçта кайас тенĕ, çавăнта кайса çÿрет. Комсомольски районĕнче пурăнакан ашшĕн сурчне илсе пынă, кăмакине хутма—вутă ăсатать.

Кăçалхи июнь уйăхĕнче ача сурчĕнчи 16 ачана Мускава илĕ ирнелăх экскурсине кайма путевкăсем панă.

— Мускава кайма шухăш пур-и? Арăмпа илсе кайма пултаратăп. Манăн ачам та пĕрле пырĕ,—каланă панĕ директор бухгалтера. Бухгалтер Алексеев директор сăмахне хапăл туса йышăннă. Вара Мускава 16 ача вырăнне 13 ача çеç кайса килнĕ.

Миронова тĕрĕ шыв çине кăларма шикленеççĕ кунта. Парторганизаци секретарĕ Н. Федоров юлташ вара;

— Пирĕн директор ун пек мар, ун çинчен калама çук,—тет. Миронов вара тата ытларах каппать.

— Ман пек авторитетлă çын районта кам пур? Мана Пĕнерçре кăна мар, министерствăра та мухтаççĕ. Эпĕ хам ĕçе пĕлетĕп. Попробуй критиковать!—айтаксăр калаçать ĕçлĕ-çынсемпе.

Парти райкомĕнче Миронов коммуниста пĕрре çеç мар ятлани, анчах вăл ăна унтан тухсанах манса кайнă.

— Курсан та, пĕлсен те—ан шарла, çăварна ан çантăр,—теççĕ ача сурчĕнчи работниксем.

Калама кирлех пулĕ

Н. ПАВЛОВ.

Корея халăхĕ хуçалăха юсас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлет

Америка интервенчĕсем Корейăра вăрçă чухне ку тараничĕн вурман тискер мосленсемпе усă курнă. Вĕсем капăлмпа нумай хуласемпе ялсене çунтарса янă, вунăшар тата çĕршер фабрикăсемпе заводсене, шахтăсемпе рудниксене пĕтĕмпех аркатса пĕтернĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин халăх хуçалăхне юсасси йывăр ĕç. Анчах пулин те Корея халăхĕ хăй ĕçре ăнăçлăх тăвасси ĕненет, мĕншĕн тесен ăна Корейăри Ĕçлĕх партийĕ ертсе пырать, вăл Совет Союзĕнчен, Китай Халăх Республикинчен тата социализм лагерĕнчи ытти çĕршывсенчен куллен-кун пысăк пулăшу илсе тăрать.

СССР правительстви Корейăн арканнă хуçалăхне юсама пĕр миллиард тенкĕ уйăрса пачĕ,—çакă Корея халăхне чĕререн савăнтарать.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикинче вăрçă хыççăн халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарассишĕн сарăлса кайнă кĕрешӳ Инсет Хĕвелтухăçĕнче мире тĕреклетес ĕçре пысăк çĕнтерӳ туни, Америка агрессорĕсемпе вĕсен пуканине—Ли Сын Ман ушкăнне хăватлăн пырса çапни пулать.

Корейăри вăрçă чарăннă хыççăн малтанхи кунсенчех шахтерсем, фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, чугун çул çинче ĕçлекенсем, строительсем юсав ĕçне хĕрӳллĕн тытăнна.

Корея железнодорожникĕсем арканса пĕтнĕ чугун çулсемпе кĕперсене хăвăртрах юсассишĕн патриотла ăмăрту сарса янă. Сăмахран, кĕске вăхăтрах Ресонган юхан шывĕ урлă касмалли чугун çул кĕперне юсанă, вара Синмак—Кэсон хушшинче поездсем пĕр чарăнмасăр çӳремелле тунă. Ку вăл халăх хуçалăхĕшĕн питех те пысăк вырăн йышăнать.

Железнодорожник-строительсем темиçе кун хушшинче тенĕ пек кĕл çеç юлнă вырăнта Пхеньян вокзалĕн пысăк суртне туса лартнă.

Августăн 5-мĕшĕнчех пуçласа, виçĕ çулталăк ĕçлемесĕр тăнă хыççăн, Демократиллĕ Корея Халăх Республикинче пассажирсене илсе çӳрекен поездсем йĕркеллĕн çӳреме тытăннă. Çав кун Пхеньянран çурçĕрти Налин портне, вилĕмсĕр Вонсана тата тăшмансен оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă Кэсона поездсем туха кайнă.

Çĕршывра предприятисене юсас ĕç анлăн сарăлса кайнă май строительство материалĕсем нумай кирлĕ.

Пхеньян çывăхĕнче Совет Союзĕнчи кирпĕч заводĕсем пек пысăк кирпĕч заводĕ тăвассĕ, унта вучухнехи оборудовани вырнаçтарса лартассĕ. Çак предприяти çулталăкра çĕр миллион кирпĕч туса кăларма пуçлать. Кирпĕч хĕртекен камăрĕсем пĕр никата пĕр миллион кирпĕч ытла хĕртсе парассĕ.

Пхеньян—Корея халăхĕн мухтав хули—çĕршывăн чи илемлĕ хули пулса тăрать. Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви столицăна юсаса çĕнетмелли тĕп плана çирĕплетнĕ. Халĕ Пхеньян урамĕсенче хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Строительство ĕçне Пхеньян çыннисем, кунсерен пиншерĕн тухассĕ. Государство опера театрне тума пуçлассĕ. Хулари тĕп урамра—Сталин ячĕпе тăракан проспектра — [illegible] учреждениесене пурăнмалли çуртсем пулассĕ.

Проспект варринче [illegible] [illegible] [illegible]

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин [illegible] ячĕпе тăракан металлурги заводне. [illegible] шăратакан завода, [illegible] цемент [illegible] тата Сунхун ГЭС-не [illegible] решени йышăннă. Çак предприятисем вăрçă аркатнă экономикăна хăвăртрах юсаса çитермелли тата индустрие малалла аталантармалли тĕп никĕс пулса тăрассĕ. Малтан палăртса хунă тăрăх, Сунхунри ГЭС çитес çултан пуçласа хальхи вăхăтринчен виçĕ хут ытларах электроэнерги пама тытăнмалла. Станцин чи пысăк генераторĕсенчен пĕрине юсаса пĕтернĕ те ĕнтĕ.

Хуçалăхне кирлĕ чухлĕ минераллă удобренисем парса тăма Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви чи малтан Хыннамри химии комбинатне юсаса ĕçе яма йышăннă.

Пир-авăр промышленноçĕн предприятийĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕç те ăнăçлă пулса пырать. Пак Сун Сек директор пулса ĕçлекен пурçăн пир тăртекен фабрикăра пĕлтĕрне юсаса, механизмсене вырнаçтарса çитерессĕ тата часах пурçăн пир-авăр туса кăларма тытăнассĕ. Апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсене тăвассĕ тата нысклатассĕ.

* * *

Ли Сын Ман вăрă-хурахла ушкăнĕ тата унăн Уолл-стритри хуçисем пуç пулса тăракан Кăнтăр Корейăра ĕç пачах урăхла. Унта çĕршыва арканса пĕтесси патне илсе çитернĕ.

Сурçĕр Корейăри пичет пĕлтернĕ тăрăх, Америка империалисчĕсем, Кăнтăр Корейăран çар полигонĕ туса хурса, Кăнтăр Корейăра 50 хулана тата 12.460 яла ишĕлтерсе тата çунтарса пĕтернĕ. Вĕсем Сеулта 785 предприятие аркатса тăкнă.

Вăрçă пынă вăхăтра Америка агрессорĕсем Кăнтăр Корейăна питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Кăнтăр Корейăн ялхуçалăхĕ те ишĕлнĕ. 1951 çулта, вăрçă уйĕнхи çулсемпе танлаштарсан, çĕршывра рис 20 процент сахалрах, 1952 çулта вара 50 процент сахалрах пухса кĕртнĕ.

Кăнтăр Корейăри хуласемпе ялсенче халăха выçлăхпа чухăнлăх асаплантарать. Апат-çимĕç хакĕ ӳснĕ. Ли Сын Ман «правительствин» пĕр министерстви пĕлтернĕ тăрăх та 1953 çулта таварсен хакĕ 1947 çулхинчен 60 хут ытла хаклăрах.

Ли Сын Ман ушкăнĕ çĕршыври чухăнлăха нимĕнле майпа та пытараймасть. Кăнтăр Корейăри хаçат унта тĕштырă пĕр миллион тонна çитмест тесе пĕлтернĕ. Çавăн чухлĕ апат-çимĕç урăх çĕршывсенчен кӳрсе пыма 160 миллион доллар кирлĕ пулать. Анчах пирĕн правительствăн, тенĕ малалла хаçат, долларсем çук, пулсан та транспорт çук пирки апат-çимĕç кӳрсе килме май пулман пулĕччĕ.

Кăнтăр Корейăра халăх выçăлла-тутăллă асапланса пурăнать пулсан та, Ли Сын Ман ушкăнĕ халăха пĕрмай çаратать. Хресченсенчен 265 тĕрлĕ налогсем, вăл шутра «социаллă нушасем валли рис», «влаçăн вырăнти административлă органĕсен расходĕсене сапламалли налог» тата ыттисем те тӳлемелле килет.

Халăх укçа-тенкине вăрласси, взяткăсем илесси, спекуляци тăвасси тата çыннăна çаратасси Ли Сын Ман «правительствин» кĕçĕн тата аслă чиновникĕсем хушшинче анлăн сарăлнă. «Минчжу чосон» хаçат çапла пĕлтернĕ: Ли Сын Ман хăй вăрттăн рынокра çаратнипе тата спекуляци тунипе иртнĕ çул 60 миллиард вон (укçа) кĕсьене чикнĕ.

Нимĕнсĕр тăрса юлнă, выçăпа вилес патне çитнĕ хресченсем çăкăр татăкĕ шыраса хăйсен ялĕсене пăрахса тухса каяççĕ. Ли Сын Ман «правительствин» ялхуçалăх министрĕ йышăннă тăрăх, хальхи вăхăтра Кăнтăр Корейăра васкавлă пулăшу памалли халăх шучĕ 9,5 миллион çынна çитет.

Кăнтăр Корейăри «Сеул синмун» хаçат нумаях пулмасть статья пичетлесе кăларнă. Унта Корейăн кăнтăр пайĕнче пуранакан ĕççыннисен трагедийĕ çинчен калаеа панă. «Кăнтăр Чола провинцийĕнчи Дансен уездĕнчи Мяхвадон ялĕнче, — тенĕ статьяра,—Пой Юн Ля хресчен, выçăпа асапланнине тӳсеймесĕр, наркăмăш çисе вилнĕ. Унăн арăмĕ тата тăватă ачи темиçе кунтан выçăпа виле». Çавăн пек тĕслĕхсем Кăнтăр Корейăра кашни кунах пулассĕ, вĕсен шучĕ кунтан-кун ӳссе пырать.

Корейăра перемири тунă хыççăн Америкăри пуç пулса тăракан ушкăнсем васкасах Кăнтăр Корейăна «пĕр-пĕрне хӳтĕлемелли договор» çине алă пустарттарчĕ. Çакă вăл Кăнтăр Корейăна Америкăн тĕспăшаллă вăйĕсен çар бази туса хурать. Ли Сын Мана кĕмĕсле çĕнĕ пулăшу пама пулнă, çара Америка хаçачĕсем США Кăнтăр Корейăна çĕнĕрен «пулăшать» тесе шăпăрма тытăннă. Çак кĕмĕсле [illegible] [illegible] кăларттарассĕ. «Чосон» [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] (70 процента [illegible]) [illegible], шахта тата [illegible] тунă çĕрте, [illegible] тата çар промышленноçĕ валли США-ран [illegible] [illegible] не тăратма» çав укçан 28 процентне кăна уйăрассĕ.

Кăнтăр Корейăри промышленноçа Америка монополийĕсем тытса илнĕ. Америка сăтăрĕсем. Çурçĕр Корейăри пичет пĕлтернĕ тăрăх, электричество обществи тенсекерне туса, электростанцисене хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Америка монополисчĕсем нефть компанине тата танкĕсенче çӳремелли общество тунă. Канвон провинцийĕнчи Санконри тата Çурçĕр Кенсан провинцийĕнчи Тăрсенри вольфрам кăлармалли пысăк рудниксене, ылтăн кăлармалли 10 пысăк приска, çĕр хăмăрĕ кăлармалли пиллĕ вырăнĕсене «государство» предприятийĕсем туса хунă, вара вĕсене Америка çыннисен аллине панă.

* * *

Корея халăхĕ, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин экономикине ура çине тăратса, хăйĕн тăван çĕршывне мирлĕ майпа пĕрлештерессишĕн, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассишĕн кĕрешет.

Мĕнпур прогрессивлă этемлĕх Корея халăхне пулăшу парать тата Корея халăхĕн мухтавлă тăван çĕршывне чечеклентерессишĕн пыракан кĕрешӳре ăна çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунать.

Г. ЕГОРОВ.



Халăх демократиллĕ çĕршывсем пĕр-пĕрне экономика енĕпе çыхăну тытесси сарăлсах пырать. Венгри Халăх Республикипе Польша Халăх Республики экономикăлла килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх Будапештра Польша Халăх Республики валли «Мазовше» ятлă пăрахут туса параççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Будапештри Георгиу-Деж ячĕпе тăракан суднăсем тăвакан заводра. «Мазовше» пăрахута шыв çине антарас умĕн.

«МАДЬЯР ФОТО» фотоӳкерчĕкĕ.

Румынири кĕнеке вунăкунлăхĕ

БУХАРЕСТ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 22-мĕшĕнче Румынире кĕнеке вунăкунлăхĕ пуçланнă Бухарестра тата республикăри ытти хуласенче кĕнеке пасарĕсем, кĕнеке сутмалли киоскисем уçăлнă, выставкăсем нумай организациленĕ. Предприятисенче, учрежденисемпе шкулсенче, ялсенчи культура çуртĕсемпе вулав çурчĕсенче литература вечерĕсем иртересçĕ, çĕнĕ кĕнекесене сӳтсе яваççĕ, писательсемпе тĕлпулусем иртересçĕ.

Кĕнеке вунăкунлăхĕ пуçланнă тĕле Румынири издательствăсем илемлĕ тата ача-пăча литературин кĕнекисене, наукăпа техника ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекесене 100 тĕрлĕ ытла пичетлесе кăларнă. Кĕнекесен пĕтĕм тиражĕ—2 миллион экземпляр.

Юлашки 4 çул хушшинче çĕршывра тĕрлĕрен кĕнекесем 13.5 пин пичетлесе кăларнă. Вĕсен тиражĕ 250 миллион экземпляр шутланать. Вăсалхи 11 уйăх хушшинче кăна 40 миллион экземпляр кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене пысăк тиражсемпе пичетлесе кăларассĕ. В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн произведенийĕсен пĕтĕм тиражĕ—11 595 пин экземпляр. 1954 çулта В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн произведенийĕсене тата 450 пин экземпляр пичетлесе кăларассĕ.

Мир хуралĕ

Венгри журналисчĕ СССР çинчен çырнă кĕнеке

БУДАПЕШТ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири «Сикра» ятлă политикăлла литература издательстви Венгри журналисчĕ Имре Комор çырнă «Совет Союзĕ—мир хуралĕ» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Кĕнекен пĕрремĕш пайĕсенче юлашки [illegible] çулсенчи событисем çинчен тата СССР [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] политикине кăтартса парассĕ.

Автор малалла Совет Союзĕ ООН-ра [illegible] вырăн йышăнса тăни çинчен тата Совет правительствипе пĕтĕм совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчере мире çирĕплетессишĕн кĕрешни çинчен калаеа парать.

Кĕнекен юлашки пайĕнче Совет Союзĕ ертсе пыракан пĕтĕм демократиллĕ лагерь миршĕн кĕрешни, çав кĕрешӳре Венгри халăхĕ хутшăнни çинчен калаеа панă.

ПОЛЬШАРА МАО ЦЗЭ-ДУНĂН СУЙЛАСА ИЛНĔ ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕН ПĔРРЕМĔШ ТОМНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРНĂ

ВАРШАВА, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Книга и знание» издательстви Мао Цзэ-дунăн суйласа илнĕ произведенийĕсен пĕрремĕш томне полякла пичетлесе кăларнă. Хальхи вăхăтра тата виçĕ тома пичетлеме хатĕрлессĕ.

Совет Союзĕпе Афганистан хушшинчи суту-илӳ çыхăнăвĕсем çинчен

КАБУЛ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Каласусем ăнăçлă вĕçленнĕ хыççăн, декабрĕн 24-мĕшĕнче Кабулра Совет Союзĕпе Афганистан хушшинче тата тепĕр çуллăха тавар çаврăнăшĕ çинчен тунă Протокол çине алă пуснă.

Çак Протокол тăрăх Совет Союзĕ Афганистана, уйрăммăн илсен, нефть продукчĕсем, металсем, сахăр, химикалисем, эмелсем, пир-авăр, автомашинăсем, оборудовани парса тăрать. Афганистан Совет Союзне çăм, çĕр мамăкĕ, тир-сăран чĕр-таварĕ, типĕтнĕ улма-çырла, çу кăлармалли вăррисем тăратать.

Пĕр-пĕрне таварсем парса тăрасси, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, чылай ӳсет.

Протокол çине çаксем алă пуснă: Совет Союзĕ енчен—Совет Союзĕн Афганистанри Посольствин çумĕнчи Суту-илӳ Советникĕ И. А. Гладков, Афганистан енчен—Наци экономикин министерствин Суту-илӳ управленийĕн Начальникĕ Абдул Вахаб хан тата Афганистанри наци банкĕн Директорĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Хайр Мухаммед хан алă пуснă.

Протокол çине алă пуснă чухне Совет Союзĕн Афганистанри посолĕ М. В. Дегтярь тата Афганистанăн Наци экономикин министрĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Абдул Рауф хан пулнă.

САХИБ СИНГ СОКХЕЯ ТĔНЧЕРИ СТАЛИНЛА ПРЕМИ ПАМАЛЛА ТУНĂШĂН ИНДИ ХАЛĂХĔ МУХТАНАТЬ

ДЕЛИ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Свадхината» хаçат, Сокхей генерал-майора «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» тĕнчери Сталинла преми пани çинчен асăнса, çапла çырать: «Пĕтĕм Инди хăйĕн мухтавлă ывăлне—Сокхей ученăя саламлать. Сахиб Синг Сокхея тунă хисеп вăл Индири мире юратакан пĕтĕм халăха тунă хисеп пулса тăрать. Сокхей ученăя миршĕн кĕрешнĕшĕн Сталинла премипамалла туни Инди умне хисеплĕ ответлăх хурать, миршĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатса пыма хушать».

«Сокхей генерала хисеп тунăшăн Индири миршĕн тăракансем мухтанаççĕ»,—тесе çырать Пенджабри «Ная жамана» хаçат.

Италири ĕççыннисен çитĕнĕвĕ

РИМ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат Италири тĕрлĕ районсенчи ĕççыннисем ĕç укçи ӳстерессишĕн тата хăйсен профсоюз прависене йышăнтарассишĕн кĕрешсе тунă çитĕнӳсем çинчен пĕлтерет. Чанчанра (Агридженто провинцийĕ) «Дзольфозанио» шахтăри 250 шахтер ĕç укçине 15 процент ӳстерттерме пултарнă. Рабочисем ĕç укçи ӳстерессишĕн нумай вăхăт хушши çине тăрса кĕрешнĕ. Шахтерсем шахтăна йышăнса унта 46 кун хушши тăнă пулнă.

Кьетири «Челлит» ятлă хут фабрикинчи 800 рабочие ĕçрен кăларса янă 16 рабочие каялла ĕçе илтернĕ.

ПРОФСОЮЗСЕН КĔРЕШЕВĔНЧИ ПĔРЛĔХШĔН

ШАНХАЙ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Токиори радио çапла пĕлтерет: Японири профсоюзсен генеральнăй совечĕн — çĕршыври чи пысăк профсоюз пĕрлешĕвĕн— секретариачĕ ĕç укçи ӳстерессишĕн тата ĕçрен кăларса янине хирĕç мĕнпур профсоюзсен пĕрлешсе кĕрешме кирли çинчен решени йышăннă.

Японири профсоюзсен генеральнăй совечĕ государствăн чугун çул администрацине, вăл забастовкăна хутшăннă çынсене айăплама хатĕрленнĕшĕн, протест панă.

ХĔВЕЛТУХĂÇ ПАКИСТАНРИ МИРЕ ХӲТĔЛЕС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИ

КАРАЧИ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС) Ассошиэйтед Пресс оф Пакистан агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Пакистанри мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет январĕн 1-мĕшĕнче «Мире хӳтĕлемелли тата Пакистанăн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлемелли кун» палăртасси çинчен решени йышăннă. Комитет йышăннă резолюцире «нимĕнле державăпа та çар союзĕ тумалла мар» тесе Пакистан правительствине чĕнсе каланă.

Хĕвеланăç Германи хăйĕн капиталне Индире вырнаçтарать

ДЕЛИ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 21-мĕшĕнче Делире Инди правительстви, пĕр енчен, Крупп концернĕ тата Хĕвеланăç Германири «Демаг» фирми, тепĕр енчен, Индире 700 миллион рупий тăракан металлурги заводĕ тăвасси çинчен тунă килĕшӳ çине алă пуснă.

Завод строительстви валли Индипе Германии «Хиндустан стил лимитед» компанине тăвассĕ. Ку завод малтанлăха пĕр çулталăк хушшинче 500 пин тонна хурçă шăратса кăларма пултарать, ун хыççăн çулталăкра пĕр миллион тонна хурçă шăратса кăлармалла тăвассĕ.

Индире металлурги заводĕ тăвасси çинчен пыиă каласусем Америкăри, Англири, Германири тата Японири капитал представителĕсем пĕр-пĕрине хытă хирĕçнĕ хару-тăрура иртнĕ.

Францин çар служащийĕ Демократиллĕ Германи енне куçнă

БЕРЛИН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] Ле Руа [illegible] Германи Республикине [illegible] пынă [illegible] тунă. Ле Руа Демократиллĕ Германи правительствинчен хăйне политикăлла хӳтĕлĕх памалли ыйтнă.

Ле Руа Демократиллĕ Германи Республикин влаçĕсем патне янă çырура çакна кăтартса панă: вăл Франци правительстви тытса пыракан политикăпа килĕшмест. Индо-Китайри вăрçă халăх ирĕклĕхне пĕтерекен вăрçă пулса тăрать, тесе [illegible] [illegible] панă: Франци пĕтĕмпех Америка капиталне пăхăнса тăрать, вăл Америкăн лагерĕ пулса пырать, унта вероотсем, кăларнисем тата ыттисем те тăвассĕ.

[illegible] рать: çак сăлтавсем пирки вăл Демократиллĕ Германи правительствинчен хăйне политикăлла хӳтĕлĕх пама ыйтма шут тытнă.

КАПИТАЛИЗМЛА ÇĔРШЫВСЕНЧЕ ХАКСЕМ ӲСЕÇÇĔ

★ Токиори радио пĕлтернĕ тăрăх, Токиори 9 электричество компанийĕн директорĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу 1954 çулта электричество энергийĕшĕн тӳлемелли хака вăтам шутпа 20 процент ӳстерессе çинчен решени йышăннă.

★ Голландири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, парламентăн пĕрремĕш палати хваттершĕн тӳлемелли хака ӳстересси çинчен калакан закон проектне ырланă. Коммунистсем кăна çак закон проектне хирĕç сасăланă.

Декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС).

Пысăк Берлинăн Халăх представительствин чрезвычайнăй ларăвĕ

БЕРЛИН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Пысăк Берлинăн Халăх представительствин чрезвычайнăй ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Пысăк Берлинăн обер-бургомистрĕ Фридрих Эберт сăмах тухса каланă.

Фридрих Эберт магистрат ячĕпе Пысăк Берлинăн Халăх представительствине Хĕвеланăç Берлинри хулари депутатсен пухăвне çакăн пек сĕнӳсем тăратма сĕннĕ:

1. Хулан икĕ пайĕн представителĕсен пĕрлехи канашлура çакăн çинчен калаçса татăлмалла: ют çĕршыв ĕçĕсен тăватă министрĕ Демократиллĕ Германи Республикипе федеральнăй Германи республикин представителĕсене хутшăнтарма ыйтса, Германи столицинче пурăнакан пĕтĕм халăх ячĕпе тăнăçă аслă державăна [illegible] ыйтмалла;

2. Германие агрессиллĕ договорсем системине—«Европăра оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен калакан тата Бонра тунă договорсене—хутшăнтарас мар тесе [illegible] [illegible]. Бон договорсем Берлин [illegible] [illegible] тăрассине ӳстерессĕ тата Хĕвеланăç Берлиншăн ăйăрăлăхсем кăларса тăратассĕ;

3. Потсдамри килĕшӳвĕн принципĕсем тăрăх, шпионсемпе агентсен мĕнпур организацийĕсен, сăмахран, «Çынлăхран тухнисене хирĕç кĕрешекенсен ушкăнĕ», «Ирĕклĕ юристсен следстви комитечĕ», «Хĕвелтухăçри бюро» текен тата ытти организацисен — Демократиллĕ Германи Республикипе Берлинăн демократиллĕ секторне хирĕç сăтăрлă ĕç туса пыракансенĕсен—ĕçне, çавăн пекех [illegible] тата фашистла организацисен, сăмахран, «Хурçă шлем» организаци, салтаксен пĕрлешĕвĕсемпе çар союзĕсен ĕçне чарса лартмалла;

4. Нимĕçсем килĕшӳ тăвассишĕн тата миршĕн тăнине кăтартса паракан мĕнпур [illegible], хаçатсене, журналсене тата фильмсене ирĕклĕн сарма ирĕк памалла; айăпласене кăратса, вăрçă, шовинизм пулăшакан тата халăхсем хушшинче курайманлăх сăракан пропагандăна чармалла;

5. Килĕшӳшĕн тата миршĕн тăракан мĕнпур партисемпе организацисене пĕрлешме, пухусем ирттерме ирĕк памалла;

6. Пĕчĕк оккупаци статучĕ текенскерĕ 1949 çулхи майăн 14-мĕшĕнче йышăннă мĕнпур постановленисене, Берлинăн суверенитетне хĕсекенскерсене, пăрахăçа кăларччăр тесе, хĕвеланăçĕнчи секторсен комендантчĕсем умне требовани лартмалла;

7. Берлинпа Демократиллĕ Германи Республики хушшинче таварсем улăштарса илессине ӳстерес тата Хĕвеланăç Берлинри ĕç тупăйман çынсен пурăнăçне лайăхлатма тăрăшса, Германин шалти суту-илӳ çинчен тунă договор çулне хушса Берлинра килĕшӳ тăвасси çинчен Пысăк Берлинри Халăх представительстви представителĕсемпе пĕрле калаçса татăлма представительсем уйăрмалла.

Пысăк Берлинри Халăх представительстви депутачĕсем çак сĕнӳсене пĕр саслăн ырласа йышăннă.

Китайри промышленность строительстви

ПЕКИН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] хаçат Аньшаньри металлурги комбинатĕнче çĕне автоматлă прокат цехĕ строительстви çинчен пĕлтерет. [illegible] Китайра кун [illegible] декабрĕн 27-мĕшĕнче строительство ĕçĕсем [illegible] [illegible] кăларма тытăнасшăн. Тĕп оборудование цехра вырнаçтарса лартнă ĕнтĕ.

Завод корпусĕнчи ĕçсем те вĕçленсе пырассĕ.

Рабочисемпе служащисен коллективĕ çак пысăк предприятие срокчен туса пĕтерессишĕн кĕрешет.

Тавар илекенсен конференцийĕ

Çак кунсенче Чебторгăн 1-мĕш магазинĕ тавар илекенсен конференцине ирттерчĕ. Магазин коллективĕн ĕçĕ çинчен директор Н. Журавлев юлташ каласа пачĕ. 1953 çулхи тавар çаврăнăш планне магазин ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне, тăваттăмĕш квартал планне декабрĕн 17-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Анчах магазин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Çавна конференцие пынă юлташсем уççăн кăтартса пачĕç, суту-илӳ культури çителĕксĕррине палăртрĕç.

— Магазинти уйрăм работниксем,—тет Кусакина юлташ,—вĕсене халăх хисеплĕ ĕç шанса панине ăнланса илеймен-ха. Хăшпĕр таварсем ĕççыннисем патне çитмеççĕ. Ача-пăча тумтирĕ, алшăлисемпе перчаткăсем, кĕпе, çăтма, резинка, ӳлар сулси, çĕпре тата ыттисем те час-часах пулмаççĕ. Ача валли чăлха илес тесе çак магазина килтĕм. Анчах вăл кунта çук, ытти магазинсенче те хăма кирлине тупаймарăм.

Гаркавцева юлташ магазинсенче апаткайĕ продукчĕсем хутран-ситрен вăна пулнине, фарш, пельменсем сутманнине палăртрĕ.

— Эпир продавецсене хамăра кăмăллăн йышăнма ыйтатпăр. Пирĕн те вĕсемпе кăмăллă пулмалла,—тет Алеева юлташ.

— Ноябрь уйăхĕнче сахет илтĕм,—терĕ Чунаева юлташ.—Тепĕр виçĕ кунтан вăл çӳреме чарăнчĕ. Темиçе хут магазина килтĕм, сехете юсама ыйтрăм, анчах памаççĕ.

Артамонов юлташ Чебторг руководителĕсене Цветкова Казаков юлташсене хытă критиклерĕ, хăшпĕр предприятисем халăх ыйтăвĕсене шута илсе ĕçлеменнине палăртрĕ.

— Чебторг директорĕн заместителĕ Казаков юлташа хĕвелçаврăнăш çуне чугун çул станцийĕнчен хăмăртрах турттарса кайма телефонпа сĕнтĕм. Вăл манăн транспорт çук терĕ те телефон трубкине шалт хучĕ,—тет оратор.

Чебторг директорĕн заместителĕ Казаков юлташ пренире тухса калаканасем критиклени йышăнасшăн пулмарĕ. «Фондсем çителĕксĕр, эпир нимĕн те тума пултараймастпăр» тесе, хăйĕн айăпне ыттисем çине хума пăхрĕ.

Конференцие пынă юлташсем суту-илӳ предприятийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме сĕнӳсем пачĕç.

Г. АНДРЕЕВ.

Ял бюджечĕ пурнăçланать

ВĂРНАР Вăрманкас ял Совечĕ (председателĕ Г. Матвеев юлташ) социализмла ăмăртура мала тухрĕ. Вăл Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ялан илнĕ хыççăн ял Совет депутачĕсем хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене пурнăçлассишĕн тата тимлĕрех ĕçлеме пуçлаç. Вĕсем хăйсен сăмахне чыслăн ĕçе кĕртсе пырассĕ. Укçатенкĕ пухас ĕç ăнăçлă пырать. Ял бюджетне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тупăшсем енĕпе 106 процент, расходсем енĕпе 95 процент тултарчĕç.

И. СТЕПАНОВ.

Шахматистсен ăмăртăвĕ

Декабрĕн 20-мĕшĕнче Канаш тата Сĕнтĕрвăрри [illegible] районĕсенче [illegible] [illegible] шахмат [illegible] [illegible] ăмăртусем пуçланчĕç. Унта районсенче тата [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] чемпионачĕн финалне тухассишĕн Канашра 8 çын, Сĕнтĕрвăрре 8 çын ăмăртса выляççĕ. Финалти ăмăртусем Шупашкарта январĕн 3—16-мĕшĕсенче пулса иртессĕ. Финала кашни спорт ăмăртура 1, 2, 3-мĕш вырăнсене йышăннă шахматистсем хутшăнассĕ.

Н. СОЛОМКИН.

Çанталăк

Çитес виçĕ кун хушшинче пирĕн республикăра пĕлĕтлĕ çанталăк тăмалла, хутран-ситрен уяртмалла. Вăйăчĕпе вăйтал юр çăвать, вырăнĕпе тĕтре тăрать. Çил хĕвеланăç енчен вĕрет. Лапкă çил вăйăчĕ-вăйăчĕпе вăйланать.

Каçсерен 15 градусран пуçласа 20 градус таран, кăнтăрла 10 градусран пуçласа 15 градус таран сивĕ пулмалла.

Декабрĕн 28-мĕшĕнче çанталăк кăштах ăшăтать. Каçхине 10—15 градус, кăнтăрла 7—12 градус таран сивĕ пулать.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — чăвашла спектакльсем: декабрĕн 27-мĕшĕнче «Нарспи», декабрĕн 28-мĕшĕнче «Аслати сулмакĕсем».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланассĕ.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине «Красный галстук».

Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетра, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — декабрĕн 27-мĕшĕнче 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеансенче «Сказка о рыбаке и рыбке», ытти сеансенче — «Мой маленький друг».

«УДАРНИК» — декабрĕн 27-мĕшĕнче «Застава в горах».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. [illegible], 6. [illegible]. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—5-54, промышленность пайĕ—5-24, информаци пайĕ—13-37, [illegible] пайĕ—5-71, [illegible] пайĕ—3-37, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—5-54, [illegible] пайĕ—7-22, издательство бухгалтерийĕ—6-36.

[illegible]

Типографи № 1 Министерство культуры Чувашской АССР.

Заказ № 3667. Тираж 50.000 экз.